ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

ВКП(б) Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1952 çул
Май
9
ЭРНЕКУН
№ 92 (8744)
Хакĕ 20 пус.
35-мĕш çул тухать.

Паян—Çĕнтерӳ кунĕ

Çичĕ çул каялла паттăр совет халăхĕпе унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем Германи империализмне çапса çĕмĕрсе историллĕ чаплă çĕнтерӳ турĕç.

Сывă пулччăр паттăр совет халăхĕ тата унăн мухтавлă Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пултăр пирĕн юратнă çулпуç тата генийллĕ полководец Совет Союзĕн Генералиссимусĕ СТАЛИН юлташ!

Иосиф Виссарионович СТАЛИН.

ССР Союзĕн Çар Министрĕн ПРИКАЗĔ

1952 çулхи майăн 9-мĕшĕ. *№ 47.* *Мускав хули.*

Юлташсем — салтаксемпе сержантсем!

Юлташсем — офицерсемпе генералсем!

Çичĕ çул каялла совет халăхĕпе унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем коммунистсен партийĕ, пирĕн аслă çулпуçăмăр тата аслă полководец Сталин юлташ ертсе пынипе Аслă Отечественнăй вăрçа çĕнтерӳллĕн вĕçлерĕç, пирĕн Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне тапăннă гитлерла захватчиксене татăклăн çĕнтерчĕç тата Европăри халăхсене фашизм пусмăрлăхĕн хăрушлăхĕсенчен хăтарчĕç.

Çĕнтерӳ Кунĕ ячĕпе Совет Çарĕн пĕтĕм личнăй составне саламласа сывлăх сунатăп!

Приказ паратăп:

Паян, майăн 9-мĕшĕнче, Çĕнтерӳ Кунĕ ячĕпе, хамăр Тăван çĕршыв столицинче—Мускавра, союзлă республикăсен столицисенче, çавăн пекех Калининградра, Львовра тата герой-хуласенче: Ленинградра, Сталинградра, Севастопольре тата Одессăра тупăсенчен вăтăр хут харăс персе салют памалла.

Сывă пулччăр совет халăхĕне унăн паттăр Çарĕ!

Сывă пултăр Совет Правительстви!

Сывă пултăр Ленинпа Сталинăн аслă партийĕ — совет халăхĕн кĕрешӳре çирĕпленнĕ авангарчĕ, пирĕн çĕнтерӳсене хавхалантараканĕ тата организацилекенĕ!

Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуçăмăр тата учителĕмĕр, генийллĕ полководец Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ!

Хамăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

ССР Союзĕн Çар Министрĕ
Совет Союзĕн Маршалĕ ***А. ВАСИЛЕВСКИЙ.***

ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Министрĕн ПРИКАЗĔ

1952 çулхи майăн 9-мĕшĕ. *№ 90.* *Мускав хули.*

Юлташсем — матроссемпе салтаксем, старшинасемпе сержантсем!

Юлташсем — офицерсем, адмиралсемпе генералсем!

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пынă Аслă Отечественнăй вăрçă çĕнтерӳллĕн вĕçленнĕренпе паян çичĕ çул тултарчĕ. Совет халăхĕпе унăн Хĕçпăшалла Вăйĕсем коммунистсен мухтавлă партийĕ, пирĕн аслă çулпуçăмăр тата генийллĕ полководец Сталин юлташ ертсе пынипе Германи империализмне хирĕç кĕрешсе пĕтĕм тĕнче историйĕнче палăрса тăракан çĕнтерӳ турĕç, пирĕн социализмлă Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварчĕç.

Фашистла Германие хирĕç пынă кĕрешӳре аслă çĕнтерӳ тунăранпа çичĕ çул тултарнă ятпа сире саламласа сывлăх сунатăп.

Сывă пулччăр паттăр совет халăхĕпе унăн мухтавлă Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пултăр пирĕн тăван Совет Правительстви!

Сывă пултăр Ленинпа Сталинăн аслă партийĕ — пирĕн çĕнтерӳсене хавхалантараканĕ тата организацилекенĕ!

Сывă пултăр пирĕн юратнă çулпуçăмăр тата генийллĕ полководец Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ!

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Министрĕ
Вице-адмирал ***Н. КУЗНЕЦОВ.***

Çĕнтерӳ кунĕ

Паян совет халăхĕпе тĕнчери мĕнпур ырă шухăшлă çынсем Совет Союзĕн Аслă Отечественнăй вăрçи çĕнтерӳпе вĕçленнĕ куна—гитлерла Германие парăнтарнă куна палă тăваççĕ. Çак кун, историри ытти паллă кунсем пекех, халăх ĕмĕр-ĕмĕр асра тытса пурăнакан чаплă кун.

Аслă Отечественнăй вăрçă кунĕсене пурте паянхи пекех астăватпăр. 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕ. Çав кунхине фашистла Германи çарĕсем Совет Союзĕ çине вăрă-хурахла тапăннă. Мирлĕ строительство тапхăрĕ иртнĕ, Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн, никама пăхăнмасăр пурăнассине сыхласа хăварассишĕн алла хĕç-пăшал тытса кĕрешмелли кунсем пуçланса кайнă. Коммунистсен партийĕ, аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ чĕннипе совет халăхĕ тăшмана хирĕç ăна ураран ӳкеричченех çапăçма отечественнăй вăрçа çĕкленнĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче гитлерла Германие хирĕç çапăçнă чухне—1941 çулхи июньтен пуçласа 1945 çулхи май уйăхне çитиччен вăхăтра—совет халăхĕпе унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем калама çук пысăк паттăрлăх кăтартрĕç. Тылри фабрикăсемпе заводсенче, колхозсемпе совхозсен уй-хирĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ çынсем Совет Çарне фронтра хăватлă çапăçма мĕн кирлине пĕтĕмпех парса тăчĕç. Пирĕн воинсем çапăçу хирĕсенче юмахри пек паттăр пулнине курса пĕтĕм тĕнче тĕлĕнчĕ. Чăтăмлăх, паттăрлăх, вилĕмрен те хăрамасăр кĕрешсе тăшмана çĕнтерме хатĕр пулни, Тăван çĕршыва вĕçĕмсĕр юратни—совет çыннисен çак ырă пахалăхĕсем вăрçă хирĕсенче уйрămах яр-уççăн палăрчĕç. Иртнĕ вăрçă çулĕсенче пирĕн халăх тылра тата фронтра тунă чаплă ĕçсем синчен истори кĕнекисем çине ылтăн саспаллисемпе çырса хунă.

Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем, генийллĕ полководец Сталин юлташ ертсе пынипе, тăшмана вăйлăн пыра-пыра çапрĕç, çĕмĕрсе тăкрĕç. Аслă Отечественнăй вăрçă мухтавлă Совет Çарĕ Берлина хупăрласа илнипе, 1945 çулхи Майăн 1-мĕшĕ умĕн çĕрле рейхстаг çуртне йышăнса илнипе, унтан—майăн 9-мĕшĕнче фашистла Германи пĕтĕмпех парăнни синчен хут çырса алă пуснипе вĕçленчĕ. Çапла совет халăхĕ вăрçă хирĕсенче фашистла Германипе унăн союзникĕсене çĕнтерчĕ. Совет Çарĕн чаплă çĕнтерӳĕсене пула Европăри халăхсем те фашизм пусмăрĕнчен хăтăлчĕç. Вăрçă кунĕсем иртрĕç, мирлĕ строительство кунĕсем пуçланчĕç.

Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пĕтĕм совет халăхĕ тылра тата çапăçу хирĕсенче паттăр та чаплă ĕçсем тунине асра тытни пире, коммунизм строителĕсене, хастарлăрах ĕçлеме хавхалантарать, аслă Совет Союзне нимĕнле тăшман та нихăçан та çĕнтерме пултараc çуккине ĕненсе тăмалли хăват парать. Çав вăхăтри паттăр та чаплă ĕçсене вĕренсе пĕлни пирĕн çамрăксене хӳрӳллĕ совет патриочĕсем, тĕллев патне çитмелли çул çинче тĕл пулакан мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерме пултаракан, хăюллă, чăтăмлă, яланах сыхă тăракан хастарлă çынсем пулса ӳсме пулăшать.

Вăрçă хыççăнхи вăхăтра та совет халăхĕ пысăк паттăрлăхпа ĕçлет. Халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантармалли пилĕк çуллăх план тăрăх палăртнă задачăсене, çавăн пекех 1951 çулхи плана та пирĕн çĕршыв ăнăçлă пурнăçларĕ. Совет Союзĕн халăх хуçалăхĕ ӳсĕм çулĕпе хăвăрт малалла кайса пырать.

Паянхи куна—фашистла Германие парăнтарнăранпа çичĕ çул тултарнине—пирĕн халăх коммунизм строительствинче хастарлă ĕçленипе палăртать. Рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем предприятисенче производство планне срокчен тултарассишĕн, лайăх продукци туса кăларассишĕн ăмăртаççĕ. Колхоз кресчĕнĕсем çуракине кĕске срокра, пысăк пахалăхпа иртерме, вăйлă тырпул никĕсне хывса хăварма тăрăшаççĕ. Майăн 6-мĕшĕнче заем сарас ĕç пуçланчĕ. СССР Министрĕсен Совечĕ СССР халăх хуçалăхне аталантармалли заем (1952 çулхи кăларăм) кăларнине пĕтĕм совет халăхĕ хĕпĕртесе кĕтсе илчĕ. Заем çырăнса илесси хуласенче те, ялсенче те патриотла пысăк çĕкленӳпе пулса пырать. Çак кунсенче совет çыннисем, пурте заем çырăнса илсе, коммунистсен партийĕпе аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Сталин юлташ тавра тачă пĕтĕçсе тăнине тата тепĕр хут кăтартса параççĕ.

Пирĕн Совет Правительстви, хамăр халăхăн тĕп интересĕсене палăртса, ытти çĕршывсемпе мирлĕ пурăнмалли, тĕнчери халăхсем килĕштерсе ĕçлесе пурăнассине çирĕплетмелли политика тытса пырать. Совет Союзĕ тĕнчери мир лагерьне, хамăр çĕршывпа пĕрле халăх демократи çĕршывĕсене, аслă Китая, Демократиллĕ Германи Республикине пĕтĕçтерсе тăракан мир лагерьне, ертсе пырать. Мир лагерĕ империалистсен лагерĕнчен—тĕнчере çĕнĕ вăрçă кăларассишĕн хыпăнакан лагерьтен вăйлăрах. Америкăпа Англи империалисчĕсем Корейăра питĕ тискер ĕç тунине—хуласемпе ялсене ишĕлтернине, чир-чĕр саракан бактерисем ярса халăха вĕлернине тĕнчери ырă шухăшлă çынсем пурте сивлеççĕ. Тискер кайăкла империалистсем темĕн пек тăрăшсан та, вĕсем тĕнчере пуç пулса тăраймĕç. Капитализм тĕнчин пурпĕрех пĕтмелле пулать, тĕнчери пур çĕршывсем те, Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсем пекех, кĕрешӳ çулĕпе пырса, малашне пурпĕрех социализм тумалли çул çине тухĕç.

Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсем тытса пыракан мирлĕ политикăна совет çыннисемпе пĕрле пĕтĕм тĕнчери ырă шухăшлă çынсем пурте ырлаççĕ. Мирлĕ ĕçе пикеннĕ совет халăхĕ çĕршывăн оборона хăватне тĕреклетессине те пĕр самантлăха та манмасть. Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ пирĕн мирлĕ ĕçе, хамăр çĕршывăн государство чиккисене çивĕччĕн хуралласа тăраççĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçăра фашистла Германие çĕнтернĕ куна паллă туса, совет çыннисем халăх хуçалăхĕн планне срокчен пурнăçлассишĕн тата хăватлăрах ĕçлеме пулаççĕ, коммунизм патне çитмелли çулпа ертсе пыракан коммунистсен партийĕпе тăван Совет Правительстви тавра, аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Сталин юлташ тавра тата тачăрах пĕтĕçеççĕ.

Çуракине кăтартуллăн иртерер!

Хĕрӳллĕ ĕçре

СОВЕТСКИ. Ваçкассинчи Ильич ячĕпе тăракан пĕрлешсе пысăкланнă колхоз членĕсем кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене нихçанхинчен те лайăх пахалăхпа иртерме, кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă, 850 пăтран кая мар çĕрулми туса илме, ытти ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне те ӳстерме Сталин юлташа çирĕп сăмах пачĕç.

Çуракинче агротехника кăтартăвĕсене тĕрĕс пурнăçласа пырассишĕн бригадăсемпе колхозниксем пĕр-пĕринпе социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Суртрисене ретлĕ сеялкăсемпе яровизациленĕ тата вутпуççинчен тасатнă паха сортлă вăрлăхсем кăна акаççĕ. Агротехникăна пăхăнса ĕçленине колхоз председателĕпе бригадирсем сăнаса тăраççĕ.

Хăмăртура Ф. Семенов юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади малта пырать. Суха тăвакансем Г. Ильин, И. Ферапонтов, А. Лазарева, Е. Ильин юлташсем, сӳрелекенсем Н. Павлова, Н. Константинов, В. Иванов юлташсем хăйсен кулленхи ĕç нормисене 120—130-шар процент тултарса пыраççĕ, ĕçе лайăх тăваççĕ.

Ильич ячĕпе тăракан колхоз хирĕнче Советски МТС-ĕнчи Н. Петухов юлташ ертсе пыракан трактор бригадинчи икĕ трактор ĕçлет. Трактористсем обязательствăсене чыслăн пурнăçлаççĕ, сехет графикĕпе ĕçлеççĕ. Н. Петров, С. Николаев трактористсене уйрăмах палăртмалла. Вĕсем сменăри нормăна яланах 50—70 процент иртерсе тултараççĕ. Ĕç пахалăхĕ лайăх.

Хирте агитаторсем колхозниксене коммунизмăн аслă стройкисем çинчен, тĕнчери лару-тăру çинчен каласа параççĕ, малта пыракансен опычĕсемпе паллаштараççĕ. Эрнере пĕрре «Малалла» ятлă стена хаçачĕ, виçĕ кунта пĕрре боевой листоксем тухса тăраççĕ. Стена хаçачĕ малта пыракансен опычĕсене анлăн сутатса тăрать. Хисеп хăми тата кăтарту хăми тунă.

Парторганизаци секретарĕ Н. Илларионов юлташ агитаторсене яланах вĕрентет, ĕçре тимлĕ пулăшать.

А. ПЕТРОВ.

Механизаторсен ăмăртăвĕнче малта пыракансем

Чăваш АССР Ялхуçалăх министерстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 5-мĕшĕ тĕлне çурхи уй-хир ĕçĕсем тăвас тĕлĕшпе çак механизаторсем пысăк çитĕнӳсем тунă.

Пăрачкав МТС-ĕ тăрăх

Завьялов юлташ ертсе пыракан трактор бригади кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 80 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă. Бригадăри трактористсем: **Николаев** тата **Кормилицын** юлташсем дизеллĕ тракторпа 266 гектар акнă, 266 гектар кĕрхи çĕртме культиваци тунă, 266 гектар сӳреленĕ.

Акимов юлташ ертсе пыракан трактор бригади кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 80 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă. Бригадăри трактористсем **Липатовăпа Лыткин** юлташсем 183 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Ефимов юлташ ертсе пыракан бригадăри **Ефремов** тата **Козлов** юлташсем дизеллĕ тракторпа 246 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Чкаловски МТС-ĕ тăрăх

Быков юлташ ертсе пыракан трактор бригади кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 52 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă. Бригадăри **Соловьев, Пахомов** тата **Винторов** трактористсем 34-шар гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Шăмăршă МТС-ĕ тăрăх

Гаранин тата **Туктаров** юлташсем ертсе пыракан трактор бригадисем кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 42-шер гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă. Бригадăсенчи трактористсем **Яковлев, Иванов, Угасин** тата **Поляков** юлташсем кашни 47—52-шер гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Вăрнар МТС-ĕ тăрăх

Социализмлă Ĕç Геройĕ **Пронькин** юлташ ертсе пыракан трактор бригади кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 43 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă, **Тойдеряков** юлташ ертсе пыракан трактор бригади 21 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă. Бригадăсенчи трактористсем **Доманин, Якимов, Макаров, Павлов** юлташсем кашни 21—28-шар гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Етĕрне МТС-ĕ тăрăх

Спиридонов юлташ ертсе пыракан трактор бригади кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 53 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă, **Недопивцев** юлташ ертсе пыракан бригада 39 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă. Бригадăсенчи трактористсем **Гущин, Коливошко, Поляков, Моисеев** кашни 31—58-шар гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă.

Тĕштырăсем акса пĕтерне

ЧУРАЧĂК. Пĕрлешсе пысăкланнă Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Çĕнтерӳ кунне пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн социализмлă ăмăртăва вăйлатнăçемĕн вăйлатса пычĕç. Хăмăртура ял ĕçченĕсем пысăк çитĕнӳ турĕç, майăн 6-мĕшĕнче ир акакан пĕрчĕллĕ тырăсене тата пăрçа йышши культурăсене акса пĕтерчĕç. Тырпула йăлтах сеялкăсемпе акса хăварнă.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕклĕ хатĕрлес тесе, планпа пăхнă чухлĕ куракăсем тата тымарçимĕçсем акнă.

Артель членĕсем кĕрхи тырă калчине пысăк лаптăксем çинче апат панă тата сӳреленĕ.

Колхоза МТС трактористсем лайăх пулăшаççĕ. М. Кириллов, С. Павлов, Н. Григорьев тата М. Трофимов трактористсем сменăри нормăна чылай иртерсе тултараççĕ.

Районти «Труд» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсем те çак кунсенчех ир акакан культурăсене акса пĕтереççĕ.

В. ПРОКОПЬЕВ,
районти ялхуçалăх пайĕн аслă агрономĕ.

Пурте заем çырăнса илер, Тăван çĕршыв хăватне тĕреклетер!

Тăван çĕршыва аталантарма

Çĕмĕрлери сĕтел-пукан тăвакан комбинатăн виççĕмĕш цехĕ. Ку цех Май уявĕ умĕнхи ăмăртура малти вырăна тухса, комбинатăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Совет правительстви СССР халăх хуçалăхне аталантармалли заем кăларнă атна цехри рабочисем, инженерсемпе техниксем митинга пухăнчĕç. Митингра цех начальникĕ Е. Александров юлташ сăмах илчĕ.

— Пирĕн цех производство планне тултарас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем турĕ. Заем çырăнса илес ĕçре те цех коллективĕ мала тухассишĕн тăрăшĕ,—терĕ Александров юлташ.

Унтан çамрăксен бригадин бригадирĕ В. Мытиков юлташ сăмах илет. Вăл ытти рабочисемпе служащисене те 4—5 эрнери ĕç укçи чухлĕ заем çырăнса илме чĕнчĕ.

— Пирĕн государство заемĕсем Тăван çĕршывăн экономикипе оборона хăватне вăйлатма, ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатма каяççĕ. Пурте пĕр шухăш-кăмăлпа заем çырăнса илни çĕнĕ вăрçă хатĕрлекен империалистсене хирĕç витĕмлĕ ответ пулать,—терĕ цех начальникĕн заместителĕ Н. Агашкин юлташ.—Эпĕ çĕнĕ заема 1.400 тенкĕлĕх çырăнса илетĕп.

Рабочисемпе служащисем пĕрин хыççăн тепри хаваслă сăмах тухса каларĕç. Маляр П. Еределов тата Т. Горяева юлташсем уйăхри ĕç укçинчен 10—20 процент иртерсе заем çырăнса илнĕ.

Заем çырăнса илесси пур цехсемпе бригадăсенче те анлă сарăлса пырать.

Хулари ытти предприятисемпе учрежденисенче те патриотла пысăк çĕкленӳпе заем çырăнса илеççĕ.

Çĕвĕ çĕлекен «Индпошив» артель коллективĕ уйăхри ĕç укçи фондĕнчен 19 процент иртерсе çырăннă.

Комбайн деталĕсем тăвакан заводра та СССР халăх хуçалăхне аталантармалли заема çырăнса илесси политикăллă пысăк çĕкленӳпе пулса пырать. Ку тĕлĕшпе кунта автотранспорт коллективĕ паха тĕслĕх кăтартать.

Е. АФАНАСЬЕВ,
(Хамăр корр.).

Пысăк хаваслăхпа

СОВЕТСКИ. Тури Ачакри çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительсен коллективĕ правительство çĕнĕ заем кăларнине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕ.

Учительсем çĕнĕ заема политикăллă пысăк çĕкленӳпе çырăнса илчĕç.

— Эпĕ,—терĕ учительница М. Семенова,—çĕнĕ заема 900 тенкĕлĕх çырăнатăп. Партипе правительство пирĕншĕн, совет учителĕсемшĕн, чунтан-чĕререн тăрăшать. Эпĕ перекетленĕ укçа та коммунизмăн аслă стройкисене тунă çĕре, мир ĕçне хӳтĕлес ĕçе кайтăр.

Ун хыççăн заема шкул директорĕ Я. Никитин 1.520 тенкĕлĕх, учительсем С. Платонов 1.150 тенкĕлĕх, Е. Дмитриев 1.120 тенкĕлĕх, С. Федоров 940 тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Кĕске вăхăт хушшинчех çĕнĕ заема шкулта 13 учитель, 11.350 тенкĕлĕх çырăнса илчĕç.

Тури Ачакри Буденный ячĕпе тăракан колхозра та çĕнĕ заем кăларнине тулли кăмăлпа йышăнса илчĕç. Колхоз председателĕ П. Семенов 1.200 тенкĕлĕх, колхоз счетоводĕ Е. Шоркина 800 тенкĕлĕх, пуçламăш парторганизаци секретарĕ И. Егоров 500 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Ытти колхозниксем те çĕнĕ заема пысăк хаваслăхпа çырăнса илеççĕ. **П. ЯЖЕЙКИН.**

Шупашкарти пир-авăр комбинатне тунă çĕрте ĕçлекенсен коллективĕ Правительство çĕнĕ заем кăларнине пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: заем сарма пуçланă кун платниксен бригадисенче. Заем çырăнаççĕ: В. Николаев (сулахайри) тата З. Рахимов (сылтăмри).

А. КОСТИН фотоӳкерчĕкĕ.

Ĕççыннисен пысăк активлăхĕ

СĔНТĔР. Районти колхозниксемпе колхозницăсем тата служащисем çĕнĕ заем кăларнине патриотла туйăмпа кĕтсе илчĕç. Колхозсемпе учрежденисенче ĕççыннисен митингĕсемпе пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Пухусемпе митингсем совет халăхĕн моралльлĕ-политикăллă пĕрлĕхне, совет çыннисем большевиксен партийĕпе Совет правительстви тата аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ таврā тачă пĕтĕçсе тăнине тепĕр хут кăтартса пачĕç. Заем çырăнма пуçланăранпа колхозниксемпе служащисен политикăллă активлăхĕпе ĕçри хастарлăхĕ татах ӳсрĕ.

Районти рабочисемпе служащисем хушшинче çĕнĕ заема майăн 7-мĕшĕ тĕлне 1 миллион та 718 пин тенкĕлĕх, хресченсем хушшинче—695 пин тенкĕлĕх сарнă.

Нумай колхозсемпе учрежденисенче заем çырăнса, укçине те çийĕнчех тӳлеççĕ. Сĕнтĕрти вăтам шкул коллективĕ ĕç укçи фондĕнчен 125 процент иртерсе çырăннă. Шкулти вĕренӳ пайĕн заведующийĕ Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ Соловьев юлташ 2.500 тенкĕлĕх çырăнса, 2 пин тенкĕ çийĕнчех тӳлерĕ. Унăн примерĕпе хавхаланса, ытти учительсем те паха тĕслĕхсем кăтартрĕç.

Пир-авăр тĕртекен фабрикăпа «Тĕрлекен» артельте заем çырăнса илесси пысăк çĕкленӳпе пырать.

Районти колхозсенче заем сарас тĕлĕшпе пултаруллă ĕçлеççĕ. «Новая жизнь», «Ударник», Сталин ячĕпе тăракан, Ворошилов ячĕпе тăракан, «Заря» тата «Знамя» колхозсенче заем çырăнса илесси ăнăçлă пулса пырать. «Знамя» колхоз членĕсем заем укçине 10 пин тенкĕ перекет кассине хывнă.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çĕнĕ заема хавхалăн, пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç.

— Тăван çĕршыва ытларах укçа-тенкĕ кивçен парас, коммунизмăн аслă стройкисене тăвассине хăвăртлатас!—çак лозунгпа иртсе пырать заем сарасси колхозниксем хушшинче. Колхоз председателĕ А. Мизюркин юлташ 1.500 тенкĕлĕх, Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕ Лукоянов бригадир 800 тенкĕлĕх заем илме çырăнчĕç.

Халăх хушшинче заем сарас тĕлĕшпе заем уполномоченнăйĕсем чылайăшĕ пуçаруллă ĕçлеççĕ. Сăмахран, Т. Вашуров, Я. Павлович уполномоченнăйсем 500-шер тенкĕлĕх çырăннă, вĕсем ĕçлекен участоксенче пурне те заем çырăнас ĕçе хутшăнтарнă.

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заема çырăнса илесси районта анлă сарăлса пырать. ВКП(б) райкомĕ районти колхозсемпе учрежденисенче агитациллĕ-массăллă ĕçе 45 агитатора хутшăнтарнă. Вĕсем ĕççыннисем хушшинче пирĕн Тăван çĕршыв халăх хуçалăхĕпе культура строительствинче историллĕ пысăк çитĕнӳсем туни çинчен, коммунизмăн аслă стройкисем çинчен, государство заемĕсен пĕлтерĕшĕ çинчен докладсемпе калаçусем ирттереççĕ.

Çак кунсенче культурăпа сутĕç учрежденийĕсем чылай ĕçсем туса ирттереççĕ. Клубсемпе хĕрлĕ кĕтессенче заем тытакан çынсем облигацисене тĕрĕслеççĕ, вылăв укçи тухнисем перекет кассине пырса укçа илеççĕ.

Районти ĕççыннисем Тăван çĕршывăн экономикипе оборона хăватне çирĕплетсе тĕреклетес шухăш-кăмăлпа çĕнĕ заема патриотла пысăк хавхаланупа çырăнса илеççĕ.

Г. АЛЕКСЕЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Заем сарас ĕç хамăр республикăра

Республикăра çĕнĕ заема сарас ĕç ăнăçлă пырать. Майăн 8-мĕшĕнчи 12 сехет тĕлне республикăра пурĕ 92.107 пин тенкĕлĕх заем сарнă. Рабочисемпе служащисем 66 894 пин тенкĕлĕх, хресченсем—25.213 пин тенкĕлĕх заем çырăнса илнĕ.

Заем сарас ĕç уйрăмах Канаш, Шупашкар тата Улатăр хулисенче лайăх пырать. Ялти ĕççыннисем хушшинче заем сарас ĕçе Пăрачкав, Муркаш, Кувакино тата Комсомольски районĕсенче лайăх организациленĕ.

Республикăри чылай колхозниксемпе колхозницăсем заем укçине çийĕнчех тӳлеççĕ. Майăн 8-мĕшĕ тĕлне Пăрачкав районĕнчи колхозниксем 302 пин тенкĕ, Чкаловски районĕнчи колхозниксем 248 пин тенкĕ, Комсомольски районĕнчи колхозниксем—260 пин тенкĕ тӳленĕ.

Заем сарас ĕç малалла пырать.

Халăх хăвачĕ

Пĕри-тавра хĕвеллĕ çуркунне
Юрлать хаваслă пурнăç юррине.
Юртан тасалнă çĕр чăн уяпла
Мăнаçлăн та кăкăр тулли сывлать.
Çĕрти сĕткен тапса хăпарнăçем
Сарăççĕ çулçă çамрăк хунавсем.
Сурхи шывсен ытарлă çутипе
Ăмăртмалла сисет сенкер тӳпе.
Миçе пин шыв çаплах ăмăртмалла
Чупса кĕрет паян Атăлалла.

Тулать мăн Атăл, анлăн сарăлать,
Этем ĕçне курса вăл савăнать.
Кун пеккине тупаймăн тĕнчере,—
Ик енĕпех хĕрлĕ ĕç вĕрет.
Кăсех мăн Атăл чаплăн хыпарлать:
Лăпкă Дона тусла вăл ыталать.
Вĕсем пĕрле малтан та малалла
Хăватлăн юхĕç Коммунизмалла.
Тулать мăн Атăл! Ырă çуркунне
Юрлать телейлĕ пурнăç юррине.
Эпир тăратпăр ралмо умне,
Чĕресемпе тытатпăр ун хумне.
Столицăран килет çĕнĕ хыпар:
— Çĕн заема пĕр çын пек çырăнар!
Çĕклентĕр пирĕн икĕслĕ хăват,
Мильярдлă мул паратпăр çĕршыва!
Суркуннехи мăн Атăл тулнă пек,
Çĕршыв вăйлантăр халăх мулĕпе!

Тулли пулассăн халăх мулĕ —
Çĕршыв ялан хăватлă пулĕ!

Аркадий ЭСХЕЛЬ

Укçине çийĕнчех тӳлеççĕ

МУРКАШ. (Телефонпа). Пӳскасси ялĕнчи ĕççыннисем СССР Министрĕсен Совечĕ çĕнĕ заем кăларма йышăннине пĕтĕм кăмăлтан ырларĕç.

«Знамя коммунизма» колхоз председателĕ С. Архипов юлташ çапла каларĕ:

— Государство заемĕ ĕçхалăх пурнăçне тата ытларах лайăхлатма пулăшĕ. Тĕреклентĕр те ӳстĕр пирĕн Тăван çĕршыв! Эпĕ çĕнĕ заема 1.600 тенкĕлĕх çырăнса илетĕп, укçине те çийĕнчех тӳлетĕп.

Колхозри партбюро секретарĕ Л. Алексеев юлташ 900 тенкĕлĕх заем çырăнса илчĕ, укçине çийĕнчех тӳлесе татрĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕ Г. Варламов юлташ 600 тенкĕлĕх çырăнчĕ, укçине парса татрĕ.

Пӳскассинчи ĕççыннисем сехет çурă хушшинче çĕнĕ заема 18 пин тенкĕлĕх çырăнчĕç, укçине пĕтĕмпех тӳлесе татрĕç.

(Хамăр корр.).

* * *

ЕТĔРНЕ, майăн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Районти ĕççыннисем СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заема пысăк активлăхпа çырăнаççĕ. Чылай колхозсенче çĕнĕ заема малтанхи кунах вуншар пин тенкĕлĕх сарнă. «1-ое Мая» колхоз членĕсем пĕр кун хушшинче çĕнĕ заема 25 пин тенкĕлĕх çырăннă. Чылай колхозниксемпе колхозницăсем заем укçине çийĕнчех тӳлеççĕ. Колхоз членĕсем пĕр кун хушшинче çĕнĕ заем укçине 15.540 тенкĕ пухса панă.

Савăн пекех Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем майăн 7-мĕшĕ тĕлне 7 пин тенкĕ пухса перекет кассине хывнă.

Çĕнĕ заема сарасси Буденный ячĕпе, Маленков ячĕпе тăракан тата ытти колхозсенче те ăнăçлă пулса пырать.

Я. СОРОКИН.

Колхозниксен патриотла ĕçĕ

ЧКАЛОВСКИ. СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заема «Гвардеец» колхоз членĕсем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Заем кăларнă ятпа иртернĕ пухура колхозниксемпе колхозницăсем патриотла хĕрӳллĕ сăмахсем тухса каларĕç, большевиксен партийĕпе Совет правительстви тата аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ таврā тачă пĕтĕçсе тăнине тепĕр хут уççăн кăтартса пачĕç.

Пухура П. Крылов колхозник çапла каларĕ:

— Пирĕн заемсем—мирлĕ пурнăç заемĕсем. Эпир государствăна кивçен панă укçа-тенкĕ коммунизмăн аслă стройкисене тума, хамăрăн Тăван çĕршыв хăватне тĕреклетме каять,—терĕ вăл.—Заем сарнипе пухăнакан укçа советлă Тăван çĕршывăн халăх хуçалăхне вăйлатма, ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатма пулăшĕ.

Пухура колхозниксем пĕрин хыççăн тепри тухса каларĕç. Вĕсем пурте, пĕр шухăш-кăмăллă пулса, çĕнĕ заема пысăк савăнăçпа çырăнса илчĕç. Нумайăшĕ заем çырăнса илсенех укçине те çийĕнчех тӳлеççĕ. Колхоз председателĕ М. Долгов юлташ 1.200 тенкĕлĕх, Н. Крысовпа С. Черепелкин колхозниксем 700-шер тенкĕлĕх, А. Матвеевпа В. Кузнецова 500-шер тенкĕлĕх çырăнса илчĕç, вĕсем укçине те çийĕнчех тӳлерĕç.

«Гвардеец» колхозра 22 пин тенкĕлĕх заем сарса, 18 пин тенкĕ укçа пухнă.

Районти Киров ячĕпе тăракан колхозра та çĕнĕ заема çырăнса илесси пысăк çĕкленӳпе пулса иртрĕ. Майăн 7-мĕшĕ тĕлне кунта 25 пин тенкĕлĕх заем сарса, 24 пин тенкине çийĕнчех пухнă.

В. ИГНАТЬЕВ.

* * *

ВАРМАР, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Правительство çĕнĕ заем кăларни çинчен пĕлтернине районти ĕççыннисем тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Заем тухни çинчен радио тăрăх илтнĕ хыççăн предприятисемпе учрежденисенче, колхозсенче, МТС-ра заем çырăнса илес ĕç анлăн сарăлчĕ.

МТС-ра пулнă митингра 2-мĕш трактор бригадин бригадирĕ С. Чернов юлташ çапла каларĕ:

— Партипе Правительство тата аслă Сталин ертсе пынипе пирĕн Тăван çĕршыв куллен-кун çĕнĕ çитĕнӳсем тăвать. Атăлпа Дон, Днепр, Аму-Дарья çинче коммунизмăн аслă стройкисем ӳссе лараççĕ, çĕçенхирсенче симĕс вăрмансем ешĕрме тытăнаççĕ. Çĕнĕ заем кăларни пире мирлĕ пурнăçăн аслă стройкисене хăвăртрах туса пĕтерме, ĕççыннисен пурнăçне тата лайăхрах та савăнăçлăрах тума пулăшать. Эпĕ 1.000 тенкĕлĕх заем çырăнса, укçине çийĕнчех тӳлетĕп.

Ун хыççăн В. Григорьев юлташ сăмах илет.

— Эпир вăйлă тырпулшăн кĕрешнипе пĕрлех халăх хуçалăхне аталантарма государствăна кивçен укçа парса пулăшатпăр. Тăван çĕршыв вăй-хăвачĕ татах ӳсĕ, уй-хирсенче тракторсемпе комбайнсем, ытти ялхуçалăх машинисем ытларах пулĕç. Сталин саманинчи телейлĕ пурнăçшăн савăнса эпĕ те 1.000 тенкĕлĕх заем çырăнса илетĕп, 500 тенкĕ çийĕнчех тӳлетĕп,—терĕ Григорьев юлташ.

Механизаторсем 4—5 эрнери ĕç укçи чухлĕ заем çырăнса илчĕç. МТС коллективĕ 120 пин тенкĕлĕх çырăнчĕ, 50 пин тенкине çийĕнчех тӳлесе татрĕ.

Заем çырăннă хыççăнах «Победа» колхозра 17 пин тенкĕ, Мичурин ячĕпе тăракан колхозра 11 пин тенкĕ, «Динамо» колхозра 15 пин тенкĕ, «Ударник» колхозра 10 пин тенкĕ укçа пухрĕç.

И. ВОЛКОВ.
(Хамăр корр.).

Тулли кăмăлпа

Правительство çĕнĕ заем кăларасси çинчен йышăннă постановленине Канаш хулинчи рабочисемпе служащисем пысăк хаваслăхпа йышăнса илчĕç. Заем кăларнă ятпа предприятисемпе учрежденисенче митингсем пулса иртрĕç, вĕсенче 12 пине яхăн çын пулнă. Митингсенче тухса каланă юлташсем çĕнĕ заем кăларнине пурте, пĕр çын пек пулса, ырлаççĕ.

— Большевиксен партийĕпе Совет правительстви тата аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ ертсе пынипе пирĕн çĕршыв коммунизмăн аслă стройкисене чыслă пурнăçласа пырать. Халăх хуçалăхĕ ӳссе, тĕрекленсе пынă май ĕççыннисен пурнăçĕ кунтан-кун лайăхланса пынипе эпир уççăн курса тăратпăр,—терĕ вагонсем юсакан заводри рабочисен митингĕнче шлифовальщик Семин юлташ.—Хамăр çĕршыв тата хăватлăн аталанса пытăр тесе, эпĕ çĕнĕ заема 1.500 тенкĕлĕх çырăнатăп.

— Пирĕн государство заемĕсем мирлĕ строительствăна каяççĕ, халăх пурнăçне татах та чечеклентерме пулăшаççĕ, çавăнпа та эпир государство заемĕсене яланах пысăк хаваслăхпа çырăнса илетпĕр. Эпĕ çĕнĕ заема уйăхри ĕç укçин 120 процентĕ чухлĕ çырăнатăп,—терĕ митингра газорезчик Самаркин юлташ.

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли заема хулари интеллигенци пысăк хавхаланупа йышăнса илчĕ. Поликлиникăра ĕçлекен врачсемпе медицина сестрисен митингĕнче шăл техникĕ М. Гулина юлташ çапла каларĕ:

— Эпĕ правительство çĕнĕ заем кăларма йышăннине тулли кăмăлпа ырлатăп. Заема активлă çырăнса илни пирĕн Тăван çĕршывăн хăватне татах ӳстерме пулăшать. Çакă вăл çĕнĕ вăрçă хатĕрлекенсемшĕн витĕмлĕ ответ пулать.

Гулина юлташ заема уйăхри ĕç укçин 150 процентĕ чухлĕ çырăнса илчĕ. Çавăн пекех поликлиникăри главнăй врач И Воробьев, Дмитриевпа Солодкова врачсем уйăхри ĕç укçинчен иртерсе, 125—150 процент чухлĕ çырăнчĕç.

Предприятисемпе учрежденисенче заем çырăнса илесси анлă сарăлса пырать. Майăн 6-мĕшĕнче касхине 8 сехет тĕлне хулари ĕççыннисем пурте заем çырăнса илес ĕçе хутшăннă.

ВКП(б) хула комитечĕпе хула Совет исполкомĕ предприятисемпе учрежденисенче массăллă-ăнлантаруллă ĕç туса пыма нумай докладчиксем уйăрнă. Вĕсем пирĕн Тăван çĕршывăн халăх хуçалăхĕ ӳссе пыни, коммунизмăн аслă стройкисем сарăлса пыни çинчен, государство заемĕсен пĕлтерĕшĕ çинчен ĕççыннисене тăтăшах ăнлантарса параççĕ.

Ĕççыннисем çĕнĕ заема пысăк хаваслăхпа çырăнаççĕ. Хула Совет исполкомĕн тĕп задачисенчен пĕри вăл—заем çырăнса илес ĕçе мĕнпур рабочисемпе служащисене активлă хутшăнтарасси, государство заемĕсем тăрăх бюджета кĕмелли укçа-тенкĕне вăхăтра пухса пĕтересси пулать.

П. КАПИТОНОВ,
Канаш хула Совет исполкомĕн председателĕ.

Совет халăхĕн аслă çĕнтерĕвĕ

П. КУРОЧКИН,
Генерал-полковник

I.

Совет халăхĕпе пĕтĕм тĕнчери ырă шухăшлă çынсем паян Çĕнтерӳ кунне, Совет Союзĕн Аслă Отечественнăй вăрçи гитлерла Германие çĕнтернипе вĕçленнĕ куна уявлаççĕ. Çичĕ çул каялла, 1945 çулхи майăн 9-мĕшĕнче, халăха чĕнсе каланинче Сталин юлташ çапла каланă:

«Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварас тесе эпир çухатусем нумай тӳсни, вăрçă пынă вăхăтра пирĕн халăх йывăрлăхсемпе хĕнхур тӳссе иртерни, Тăван çĕршыва хӳтĕлесе хăварас тесе тылра тата фронтра хĕрӳллĕн ĕçлени,—çаксем пурте ахаль пулмарĕç, тăшмана пĕтĕмпех çĕнтернипе вĕçленчĕç» (Совет Союзĕн Аслă Отечественнăй вăрçи çинчен. Госполитиздат, 1951 ç., 193 стр.).

Аслă Отечественнăй вăрçă пирĕн Тăван çĕршывшăн йывăр тĕрĕслӳ пулчĕ. Совет халăхĕпе унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсен вăрçăра тăшмана çĕнтерме пысăк паттăрлăхпа ĕçлемелле, паттăр çапăçмалла пулчĕ.

Нимĕççĕн фашистла çарĕсем пирĕн çĕрсене, пирĕн тырпула, нефте туртса илме, пирĕн çĕршывра помещиксемпе капиталистсен влаçне каялла тавăрма, пирĕн нациллĕ культурăпа нациллĕ государственноçа пĕтерсе хума тĕллев тытнă. Çапла вара ĕç Совет государствин пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен пынă. Пĕтĕм совет халăхĕ ирĕклĕхшĕн кĕрешмелли вăрçа çĕкленчĕ. Аслă Отечественнăй вăрçăра пирĕн тĕллев хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварасси, Европăри халăхсене фашизм пусмăрĕнчен хăтарасси пулчĕ. Совет халăхĕ чи тĕрĕслĕхлĕ вăрçă вăрçса, хамăр никама пăхăнмасăр пурăнассине, Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чыслăхне, социализмшăн кĕрешсе тунă аслă çĕнтерӳсене сыхласа хăварчĕ, мĕнпур халăхсен ирĕклĕхĕшĕн кĕрешрĕ.

Фашистла Германин вăрçи тĕрĕслĕхсĕр, захватчикла, ытти халăхсене çаратмалли вăрçă пулнă.

Фашистла Германи, Совет Союзĕ çине тапăнма хатĕрленсе, хăйĕн пысăк çарне пĕтĕмпех мобилизацилесе çитерни, унăн çарĕн йышĕ Совет Çарĕнчен пысăкрах пулнă, унăн çар техники, пуринчен ытла танксемпе авиаци, ун чухне Совет Çарĕн аллинче пулнă техникăран ытларах пулнă. Фашистсен çарĕнчи капăйчăксем, Хĕвеланăçĕнче çăмăл çĕнтерӳсем тунипе вĕçкĕнленсе, кĕтмен çĕртен тапăннипе усă курса Совет Союзне пите хăвăрт парăнтарма шутланă. Анчах гитлерла политиксем, империалистла мĕнпур реакционерсем пекех, сĕмсĕр плансем туса, пĕтĕмпех путланса ларчĕç. Пирĕн çар тăшмана хирĕç паттăр çапăçма тытăнсанах Совет Çарĕ пысăк хăватлă пулни, пирĕн çарсем шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен калама çук çирĕп пулни курăнчĕ. Совет çарĕсем Ленинград, Смоленск, Киев, Одесса, Севастополь патĕнче паттăр çапăçса, ытти вырăнсенче те тăшмана хирĕç пырапыра çапса нимĕççĕн фашистла çарĕсене хавшатса пычĕç.

1941 çулхи кĕркунне Мускав патĕнче, Ростов енче тата Тихвин районĕнче хаяр çапăçусем сарăлса кайнă. Çав çапăçусенче тăшмана пите хытă пырса çапнă. Гитлеровецсем туса хатĕрленĕ план—«çиçĕм пек хăвăрт пулмалли вăрçă» планĕ путланса ларнă. Фашистсен çарĕсене никам та çĕнтерме пултараймасть тесе калакан суя халапа Совет Çарĕ аркатса тăкнă. Нимĕççĕн фашистла çарĕсем кĕтмен çĕртен пырса тапăннă пирки малтанхи вăхăтра вăрçăра тан мар условисем пулса тăнăччĕ, çавăн пек тан мар условисене чăсах пĕтерсе хунă Вăрçăн малтанхи тапхăрĕн итогĕсене туса, Сталин юлташ çапла кăтартса панă: «Халĕ ĕнтĕ вăрçă çунçулне кĕтмен çĕртен тапăннă пирки пулнă факторсем мар, яланах пыракан факторсем: тылăн çирĕплĕхĕ, çарăн шухăш-кăмăлĕ, дивизисен хисепĕпе пахалăхĕ, çарсене хĕçпăшаллантарни, çарăн начальствующи составĕн организаторла пултарулăхĕ татса параççĕ» (савăнтах, 43—44 стр.).

Сталинград патĕнчи питĕ пысăк çапăçура Совет Çарĕ тата сталинла çар искусстви нумай малта тăни уççăн курăнчĕ. Сталинград патĕнчи çапăçу хыççăн тăшман текех ураланайман. Ку çапăçу нимĕççĕн фашистла çарĕн вăйĕсем чакма пуçланине кăтартса панă. Совет Çарĕ Курск патĕнче нимĕççене çĕмĕрсе тăкни, Днепр патĕнче кĕрешсе çĕнтерни, Смоленск патĕнче тăшмана пырса çапни вăрçăри ĕçсене тĕппренех улăштарнă. Совет Çарĕ çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса пынă.

1944 çулта совет çарĕсем тăшмана вунă хут питĕ хытă пырса çапрĕç. Çак çапăçусем Аслă Отечественнăй вăрçă историне татăклă çĕнтерӳсем пулса кĕрсе юлчĕç. Совет Çарĕ пыра-пыра çапнипе фашистсен вăрçă вăрçма тунă пĕрлешĕвĕ саланса кайрĕ. Тăван çĕршыва тăшмантан тасатса, Совет Çарĕ вăрçă ĕçĕсене гитлерла Германи çĕрĕ çине куçарчĕ.

Совет Çарĕ 1945 çулта питĕ пысăк хăватпа пыра-пыра çапнипе тăшман пĕтĕмпех лучăрканса ӳкрĕ. Гитлерла Германин вăрçăра парăнмалла пулса тăчĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçăра совет халăхĕн паттăр кĕрешĕвне большевиксен аслă партийĕ—совет халăхĕн кĕрешӳре тĕрĕсленнĕ çулпуçĕ хавхалантарса тата организацилесе пычĕ, çавăнпа совет халăхĕ вăрçăра пĕтĕм тĕнче историйĕнче палăрса тăракан пысăк çĕнтерӳ турĕ.

«Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче,—тесе кăтартса парать Сталин юлташ,—коммунистсен партийĕ пирĕн çĕршыва пĕрлĕхлĕ çар лагерьне пĕтĕçтерчĕ, халăхпа çарăн пĕтĕм вăй-хăватне пĕр тĕллеве—тăшмана çĕмĕрсе тăкассине—пурнăçламалли çулпа илсе пычĕ» (ССР Союзĕн Оборона Халăх Комиссарĕн приказĕ, 8-мĕш №, 1946 çулхи февралĕн 23-мĕшĕ).

Патша саманинче пирĕн çĕршыв кая юлнă, пуринчен ытла çĕрĕçĕпе пурăнакан çĕршыв пулнă. Большевиксен партийĕ тĕрĕс политика тытса пынипе сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче пирĕн Тăван çĕршыв индустриллĕ-колхозлă социализмлă хăватлă держава пулса тăчĕ. Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, вăл воспитани ĕçне пысăккăн туса пынипе, пирĕн çĕршывра совет обществин моральлĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ пулса çирĕпленчĕ, ССР Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ çирĕпленчĕ. Çавна май пирĕн çĕршывăн оборона пултарулăхĕ тĕрекленчĕ. Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ пысăк хăватлă пулса тăчĕç.

Эпир Аслă Отечественнăй вăрçăра çĕнтерни советлă общество стройĕ çĕнтерни пулчĕ. Советлă общество стройĕ вăрçă чухнехи йывăр тĕрĕслеве ăнăçлă тӳссе иртерчĕ, хăй пурнăçлă пулнине, хăй никам çĕмĕреймин çирĕп пулнине кăтартса пачĕ. Вăрçă советлă общество стройĕ общество организацийĕн чи лайăх форми пулнине кăтартса пачĕ.

Эпир гитлерла Германие çĕнтерни пирĕн советлă государство стройĕ çĕнтерни пулчĕ. Нумай нациллĕ Совет государстви вăрçă чухнехи йывăр тĕрĕслеве ăнăçлă тӳссе иртерчĕ, хăй пурнăçлă пулнине пĕтĕм тĕнчене кăтартса пачĕ.

Гитлерла Германие çĕнтерни Ленин—Сталин партийĕ пăхса ӳстернĕ тата çапăçусенче çирĕпленнĕ Совет Хĕçпăшаллă Вăйĕсен çĕнтерĕвĕ пулса тăчĕ. Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ тăшман çарĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкрĕç. Аслă Отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи çапăçусенче пирĕн çар ку чухнехи чи лайăх çар пулни, унăн питĕ лайăх хĕçпăшал, ăста командирсем пурри, вăл шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен чи çирĕп çар пулни курăнчĕ.

Совет халăхĕ вăрçă çулĕсенче паттăр ĕçлесе фашистла Германие çĕнтермелле турĕ. Вăрçă чухнехи пысăк йывăрлăхсем совет халăхĕн хăватне хавшатаймарĕç, унăн вăй-хăвачĕпе кăмăлĕ тата ытларах çирĕпленчĕ. Пирĕн халăх хăй чăннипех паттăр халăх пулнине кăтартса пачĕ. Совет çыннисем пысăк паттăрлăхпа ĕçлени историе Совет Çарĕн воинĕсем фронтра тунă паттăр ĕçсемпе пĕрлех кĕрсе юлчĕç.

Совет халăхĕпе унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене аслă полководец, гениллĕ стратег, ăсларăн та ăслă çулпуç Сталин юлташ ертсе пычĕ, çавăнпа эпир паттăр кĕрешсе тăшмана çĕнтерме пултартăмăр. Сталин юлташ Совет Çарĕн мĕнпур стратегиллĕ планĕсене туса хатĕрлерĕ, питĕ пысăк çапăçусене хăй ертсе пычĕ.

Сталинла çар искусстви социализмлă стройăн чи паха енĕсем çине таянса тăрать. Вăл—социализмлă государствăн çар искусстви. Сталин юлташ гениллĕ пурнăçласа пынă совет çар искусстви Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче кĕрешĕвĕн тĕрлĕ формисене (стратегиллĕ, оперативлă, тактикăллă формисене) тĕрĕс сыхăнтарса пычĕ. Совет Çарĕ тăшман çарĕсене савăрса илмелли тата савăрса илнĕ тăшмана пĕтерсе тăкмалли майпа питĕ ăста усă курчĕ.

Аслăран та аслă полководец Сталин юлташ пирĕн çĕршыва чаплă çĕнтерӳ патне илсе çитерчĕ, вăл ертсе пынипе эпир тăшмана çĕнтерсе тăкрăмăр, пĕтĕм тĕнче историйĕнче палăрса тăракан çĕнтерӳ турăмăр.

Çавăнпа ĕнтĕ çĕр çинчи мĕнпур тӳрĕ кăмăллă çынсем, малашне пулас ăрусем те Сталин юлташа вăл тĕнче культурине фашистла вăрă-хурахсенчен çăлса хăварнăшăн мухтаса тата ырласа пурăнĕç.

II.

Аслă Отечественнăй вăрçă ирĕклĕхшĕн кĕрешмелли вăрçă пулчĕ. «Çак фашистла пусмăрçăсене хирĕç пыракан пĕтĕм халăхăн Отечественнăй вăрçин тĕллевĕ,—тесе кăтартса панă Сталин юлташ 1941 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă сăмахра,—пирĕн çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăха пĕтересси çеç мар, тата Европăри мĕнпур халăхсене, Германи фашизмĕн пусмăрĕнче асапланакан халăхсене пулăшасси пулса тăрать» (Совет Союзĕн Аслă Отечественнăй вăрçи çинчен. Госполитиздат, 1951 ç., 16 стр.).

Совет халăхĕ тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вăхăтĕнче Европăри халăхсене фашизмăн хăрушă пусмăрĕнчен хăтарнине истори нихçан та манас çук.

Пĕтĕм тĕнчери хура ĕмĕтлĕ çынсем, пуринчен малтан Америкăпа Англири империалистсем, гитлерла Германипе милитаристла Япони çине пысăк шанчăк хунă пулнă, вĕсем Совет Союзне, пĕтерсе хураймасан та, чылай вăйсăрлатма, унăн тĕнчери влиянине хавшатма пултарассĕ, тесе шутланă.

Германири фашизма Америкăпа Англири империалистсем тăрантарса ӳстернĕ пулнă. Çав империалистсем Германи фашизмĕ Совет Союзне хирĕç, пĕтĕм тĕнчери мирпе социализма хирĕç кĕрешмелли вăй пулать, тесе шутланă. Америкăпа Англири империалистсем вăрçă вăхăтĕнче Совет Союзне хирĕçле политика тытса пыни иккĕмĕш фронт уçас ĕçе ытуăрла уççăн палăрнă. США-па Англи правительствисем



1952 çулхи Майăн Пĕрремĕшне Мускавра уявлачи. Мускав гарнизонĕнчи çар парачĕ. ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: пехота Хĕрлĕ площадьре.
В. САВОСТЬЯНОВ фотоўкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Т Е А Т Р

„Суворовецсем“

Çак кунсенче Пĕтĕм Российри ача-пăча театрĕсен смотрĕ пуçланчĕ. Пирĕн республикăри ача-пăча театрĕ смотрăн малтанхи кунĕнче И. Моторинпа Е. Рысс çырнă «Суворовецсем» ятлă пьесăна лартрĕ. Спектакле ЧАССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ В. С. Петров хатĕрленĕ, художникĕ—Б. Баженов, музыкине йĕркелекенĕ—А. Васильев.

Ку спектакле хатĕрленĕ чух театр коллективĕ умĕнче çамрăк куракансене суворовецсен пурнăçĕпе паллаштарас тĕллев çеç мар, çамрăксене Тăван çĕршыва юратма, шкулта тăрăшса вĕренме, культурлă та хастарлă, сăпайлă та тўрĕ кăмăллă, хăюллă та вăйлă çынсем пулса ўсме, умра тăракан пур йывăрлăхсене те паттăррăн çĕнтерсе пыма вĕрентес задача тăнă. Хулари пионерсемпе шкул ачисем спектакле хапăлласах йышăнни, ăна пысăккисем те юратса пăхни театр коллективĕ хăйĕн умне лартнă задачăна чылай енчен ăнăçлă пурнăçланине кăтартать.

Пьеса авторĕсен тĕп шухăшне спектакле лартакан режиссерпа рольсенче выляакан артистсем ĕненмелле тата хумхантаракан образсем урлă уçса панă теме пулать. Спектаклĕн тĕп шăнăрне çирĕп тытса пыракан пур событисем те Володя Бойцов образĕпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Çавăнпа та спектаклĕн пахалăхĕ П. Бочаров артист Володя Бойцов рольне килĕшўллĕ вылянинчен нумай килет.

Кам-ха вăл Володя?

Володя Бойцов—çамрăклах нумай «хура-шур» курнă 15—16 çулхи ача. Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче унăн амăшĕ фронтра çухалнă, амăшне фашистсем çакса вĕлернĕ. Володя 11 çулта чухнех ирсĕр захватчиксене хирĕç кĕрешекен партизансене пулăшнă. Каярахпа вăл Совет Çарĕн ретĕнче хăюллă та паттăр разведчик пулнă. Унăн кăкри çинче виçĕ медаль йăлкăшать. Вăрçă пĕтсен Володяна хăйĕн командирĕсем Суворов училищине вĕренме янă. Спектакль шăпах çитĕ вăл суворовецсен ретне пырса кĕнипе пуçланать. Çĕнĕ юлташĕсем паттăр фронтовика питĕ хапăл туса йышăнаççĕ. Ан-

чах «ун пек кун пеккине куркаланă» Володя хăйне мăнаслăн тыткалать. Суворовецсемпе паллашнă чух вăл кашнинчех, вĕçкĕнреххĕн честь парса: «гварди сержанчĕ Бойцов», тет. Ăна Васильев капитанпа (Ф. Степун артист) паллаштараççĕ. Володя каллех хăйне: «гварди сержанчĕ Бойцов», тет. Кунта ăна пирвайхи хут тўрлетеççĕ.

Çапла вара Володяшăн йăлтах урăхла пурнăç пуçланса каять. Суворов училищинчи çирĕп йĕркесене вăл питĕ хуллен хăнăхса пырать, вĕренессе те хĕнпе вĕренет тата малтанхи вăхăтра юрăхсăр ĕçсем те тăвать. Фронтра чух табак туртма вĕреннĕскер, вăл кунта та вăрттăн туртать, Крайнев ятлă суворовеца (В. Сафонеев артист) туртма вĕрентет. Тепреххинче вĕсем, çав Крайневпа пĕрле хулана тухсан, урамри ачасемпе çапăçса каяççĕ. Володя туслăха та тĕрĕс мар ăнланать. Училищере вăл лайăх вĕренсе пыракан комсомолецпа—Сергей Смирновпа (В. Соловьев артист) çывăх туслашать. Сергей ăна яланах вĕренўре пулăшса пырать. Пĕррехинче вăл, Володяна математикăпа нумай пулăшса ларнă пирки, вырăс чĕлхипе лайăх хатĕрленеймест те, пуçласа «3» паллă илет. Володя вара Сережăна «хĕрхенсе», хирĕç «тав тума» шутлать. Ахаль чух пăшалпа питĕ тĕл перекенскер, вăл ăмăрту вăхăтĕнче юри начар персе, Сережăна мала тухма май парать. Анчах Володя мĕнле «тав тунине» Сережа хăех генерал умĕнче тăрă шыв çине кăларать. Генерал Володяна çавăншăн выговор парать. Çакăн хыççăн Володя хытă кўренсе Сережăпа хирĕçсе каять. Пĕр вăхăтра вăл хăйне училищерен кăларма ыйтса рапорт çырма, унтан каллех çар ретне, хăйĕн ĕлĕкхи юлташĕсем патне таврăнма та шухăшлать. Анчах ун тавра—шанчăклă юлташсем, ырă кăмăллă совет çыннисем. Вĕсем Володяна хăйĕн йăнăшĕсене ăнланса илме пулăшаççĕ. Юлашкинчен вара вăл лайăх суворовец пулса тăрать.

Володя хуллен-кулленех юсанса пынине, малашне вăл чăн-чăн совет офицерĕ пулма пултарассине спектакль куракансем ĕненеççĕ. Вĕсене уйрăмах Володя хăйĕн йăвашĕ çинчен хăех Васильев капитана каласа пани тата, ВЛКСМ комитечĕ ăна вăхăтлăха комсомола илмесĕр хăварнă хыççăн, вăл Васильев капитанпа чун-чĕререн калаçни (Володя хăй вунпĕр çулта чухнех фронтра йывăр аманнă Васильева фашистсен аллине çакланасран хăтарнă пулнă), капитан ăна чĕререн тав туса хăйĕн кăкри çумне ыталани хытă хумхантарать. Çавăн пекех çар вăййи вăхăтĕнче Володяпа Сережа хăйсене вăрмайта мĕнле тыткаланине, Володя, вилĕмрен кăрамасăр, лачакана путакан Крайнева хăтарнине тата юлашки картинăра вĕренсе тухнă суворовецсем хăйсен шкулĕпе, хăйсен юратнă командирĕсемпе сывпуллашса училищĕн хĕрлĕ ялавне чĕркуçленсе чуптунине хумханмасăр пăхса ларма çук.

Маларах асăннă артистсемсĕр пуçне спектакльте Аня Смирнова рольне О. Елагина артистка, Алешинпа Луговой суворовецсен ролĕсене А. Винокуровпа Г. Александров артистсем килĕшўллĕ вылянине палăртса хăвармалла.

Спектакльте çитменлĕхсем те çахал мар. Сăмахран, пысăк çынсен ролĕсене вылякан артистсем, уйрăмах М. Зубков (ватă машинист тата Прокопьев полковник), Н. Бордынев (Федотыч швейцар), Е. Кампе (Мария Петровна), В. Осипов (Малинин генерал) хăйсен образĕсене лайăхах туса çитереймен. Çар çыннисен (офицерсен) ролĕсене выляакан артистсем хăйсене хăйсем тивĕçлĕ те типтерлĕн тыткалама пĕлеймеççĕ. Декорацисем, пĕтĕмĕшпе илсен, лайăх темелле, анчах иккĕмĕш картинăри хысалта çакăнса тăракан залнике питĕ шупка сăрпа сăрланă. Çавăн пекех Васильев йĕркеленĕ музыкăна та мухтама çук, вăл спектакльпе тачă çыхăнса тăмасть.

Асăннă çитменлĕхсене пĕтерсен, «Суворовецсем» спектакль театр репертуарĕнче малашне тивĕçлĕ вырăн йышăнасса шанас килет.

А. КАЛКАН.

Коммунизмăн аслă стройкисенче

Атăлпа Дон хушшинчи канал ĕçе кĕрес умĕн

Ергенински тўпем çине хăпарсан, унтан Дон еннелле тата Атăл еннелле пăхсан, çеçенхирте çĕнĕ шыв çулĕ мĕнле пуласси лайăх курăнать. Калачран пуçласа Сталинграда çитиччен сарăлса выртакан çĕр километр анлăш çеçенхирте гидротехника сооруженийĕсем нумай, унта—шлюзсем, насус станцийĕсем, шыв чармалли хапхасем, паромпа шыв урлă каçмалли вырăнсем, чугун çул тата автомобиль çулĕсем çинчи кĕперсем. Вĕсене тăвас ĕç вĕçленсе пырать. Халĕ ĕнтĕ сталинла саманари аслă строкăсенчен пĕрне туса пĕтерес кун çывхарса çитнине куçпа куратăн.

Апрель уйăхĕнче шыв çулĕ çинче Карповски, Береславски тата Варваровски водохранилищĕсем пулса тăчĕç. Вĕсем çурхи шывсем юхса пынипе тата хăватлă насус станцийĕсем Дон шывне уçласа янипе тулчĕç. Каналăн Мариновкăпа Береславка хушшинчи 19 километр тăршшĕ участокне шыв тулнă. Вăл пысăк та анлă юханшыв пекех курăнать.

Халăх икĕ аслă юханшыва пĕрлештересси çинчен, типĕ çанталăклă çеçенхирсене урăхлатса çĕнетесси çинчен ĕмĕртеннех ĕмĕтленсе пурăннă, халĕ çав ĕмĕт пурнăçа кĕрет. Насус станцийĕсем Дон шывне тĕп каналсене уçласа яраççĕ. Çав шыв халĕ ĕнтĕ колхоз уй-хирĕсене çитнĕ. Цимлянски водохранилищĕне шыв тулать. Дон шывĕ, Ергенински тўпем урлă каçса, хăйĕн çулĕ çинчи лапамсене тулнипе çĕнĕ водохранилищĕсем тăвать, Атăл патнелле каять.

Çак кунсенче Сталинград облаçĕнчи Нижне-Яблоневая хутор патĕнче çĕре шăвармалли 54 километр тăршшĕ тĕп канала тума тытăннă. Ăна Генераловски канал, теççĕ. Ку канала тăвас ĕçе нумай пулмасть организациленĕ «Сталинградводстрой» трест ертсе пырать. Каналти шывпа чи малтан кăнтăрти районсенчи çĕре шăварма палăртнă. Трест главнăй инженерĕн сĕтелĕ çинче хулăм кĕнекесем—тĕп каналсен, çĕре шăвармалли пĕчĕк каналсен проекчĕсем выртаççĕ. Ку каналсене темиçе миллион гектар шутланакан пысăк территорире тăваççĕ.

Акă, 1952 çулхи çуркуннехи тепĕр чаплă çĕнĕ япала. Атăлпа Дон хушшинчи вырăнта икĕ çул каялла хăмăр, ўсентăрансăр çеçенхир пулнă. Çав вырăнта халĕ нумай пулмасть куçарса лартнă йывăççем çулçă кăлараççĕ. Шăнкăрчсем хаваслă чĕвĕлтетеççĕ. Яр-çутă хĕвел çуттинче этем хăйĕн аллипе тунă тинĕссен хумĕсем явăнаççĕ, вĕсем йĕри-тавралăха ўсентăрансене чĕртекен тата пурнăç паракан уçă сывлăш сараççĕ. Этем хăйĕн аллипе тунă юханшывсем хĕрринче ялсем лараççĕ. Атăлпа Дон хушшинчи сĕнелнĕ ялсем çывăхĕнче тинĕс пулса тăни, пурнăç улшăнни çав ялсенче пурăнакан çынсене питĕ савăнтарать. Водохранилищĕсем тата канал çыранĕсенче пĕчĕк хуласем пулса тăнă, унта—илемлĕ чул суртсем. Çав суртсен стенисем тĕрлĕ тĕслĕ: шурă, симĕс, шупка. Суртсене хĕрлĕ черепицăпа витнĕ. Вĕсем çеçенхирте пысăк чечексем пекех курăнаççĕ.

Суркунне строительсем умне çĕнĕ йывăрлăхсем тухса тăнă. Вĕсем мĕнпур резервсене шута илнĕ, тĕплĕн шухăшласа пăхнă — ĕçсене туса пĕтермелли срок çывхарнă, анчах туса çитермен ĕçсем Водораздельнăй тата Чапурниковски районсенче çаплах нумай юлнă-ха. Ку районсене—стройкăри пысăк ĕçсен участокĕсене—строительсем пулăшма тытăннă.

Береславка районĕнчи строительсен коллективĕ малта пырать. Вăл тĕп ĕçсене туса пĕтернĕ. Ку коллектив пĕр-пĕрне социализмлă пулăшас йĕркепе кўршĕри Мариновка тата Водораздельнăй районсенче ĕçлеме çынсемпе техника янă. Красноармейски район руководителĕсем те кўршĕри районсене пулăшас шутпа унта çынсемпе техника янă. Кая юлнă участоксене пулăшу парас ĕç строительство районĕсенче те анлă сарăлнă. Инжейер-прораб Ирина Александровна Невзорова 13-мĕш шлюза тунă çĕре хăйĕн участокĕнчи мостовщиксене пурне те илсе пынă. Шлюза Дон шывĕпе çыхăнтаракан канала тунă çĕрте Невзорова инженерăн мостовщикĕсем канал çыранĕсене—200 пин тăваткал метр вырăна—чул сарас ĕçе срокчен туса пĕтернĕ.

Невзорова—Мускав çынни. Вăл Мускаври строительнăй институтран вĕренсе тухнă. Атăлпа Дон хушшинчи канала тума тытăннă кунранпах Невзорова Дон районĕнче ĕçлет. Вăл çĕнĕ Ильевкăна тунă çĕрте, шыв илсе тăмалли центра тунă çĕрте ĕçленĕ. Çĕр чавакан механизмсен участокĕнчи ĕçсене ертсе пынă, вăл ултă километр тăршшĕ каналăн çыранĕсене чул сарас ĕçе организациленĕ. Халĕ вăл районăн чи юлашки ударнăй участокĕнче—шлюз тунă çĕрте ĕçлеме пынă.

Атăлпа Дон хушшинчи шыв çулĕ ĕçе кĕмелли историллĕ кун çывхарнăçемĕн çывхарать. Канал çинчи насус станцийĕсене виççĕшне те туса пĕтернĕпе пĕрех. Виççĕмĕш, вунвиççĕмĕш, тăваттăмĕш, саккăрмĕш тата вуннăмĕш шлюзсене тунă çĕрте строительствăпа монтажăн тĕп ĕçĕсене туса пĕтернĕ, ытти шлюзсене тунă çĕрте те ĕç вĕçленсе пырать. Калачри порта тăвакансем питĕ тăрăшса ĕçлеççĕ. Атăлпа Дон хушшинчи канал ĕçе кĕнĕ тĕле шыв вокзалне туса пĕтерессĕ тата Центральнăй набережнăйри ĕçсем вĕçленеççĕ.

Атăлпа Дон хушшинчи пур сооруженисене тунă çĕре те çĕнĕ çынсем—электромонтажниксем килсе çитнĕ. Вĕсем хамăр çĕршывра тунă паха приборсене вырнаçтарса лартаççĕ, çав приборсем пăрахутсене шлюзсен камерисем витĕр кăларса ярас ĕçе пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех механизацилеме май параççĕ.

Пур çĕрте те сооруженисене архитектура тĕлĕшĕнчен илемлетеççĕ. Канала Атăл енчен пырса кĕмелли вырăнта ĕç вĕресе тăрать. Аркадий Науменко ертсе пыракан водолазсем кунта шыв айĕнче пиншер километр çырана çирĕплетнĕ. Атăлпа Дон хушшинчи аслă шыв çулĕн пĕрремĕш маякне тăваççĕ.

Мускавран Сталинграда нумай пулмасть Сталин юлташăн пăхăртан тунă монуменчĕн деталĕсене илсе килнĕ. Çак витех те пысăк монумент Атăлăн сылтăм çыранĕнче—канала кĕмелли вырăнта пулать. Аслă çулпуçăн 26 метрлă скульптурине тимĕрпе бетон постамент çине çирĕплетсе лартма, постамент—5-6 хутлă çурт çўллĕш. Монтаж ĕçĕсене Мускавран килнĕ бригада тăвать. Монтажниксене ĕçре монумент проекчĕн авторĕ — Сталинла преми лауреачĕ Е. В. Вучетич тата Молдаван ССР-ĕн искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Л. П. Дубиновский ертсе пыраççĕ.

Атăлпа Дон хушшинчи канал ĕçе кĕрес вăхăт çывхарса çитнине кăтартакан паллăсем кунтан-кун нумайланса пыраççĕ. Нумай пулмасть Красноармейски строительнăй район вырнаçнă çурт çине халĕ ылтăн саспаллисемпе «Волжский район гидросооружений» тесе çырнă вывеска çапнă. Ку вара—шыв çулĕ тăрăх суднăсем çўретес тĕлĕшпе ĕçлекен учреждени. Строительсем хăйсен суртне шыв çулĕпе усă курас ĕçе туса тăракансене (эксплуатационниксене) панă, хăйсем урăх çĕре куçнă. Береславка патĕнчи строительнăй районăн начальникĕ И. К. Бирюков халĕ каналпа усă курас ĕçĕн çĕнĕрен тунă управлении пуçлăхĕ пулса ĕçлеме тытăннă. Атăлпа Дон каналĕпе усă курас ĕçре ĕçлекенсен коллективĕсенче халĕ парти организацийĕсене тăваççĕ. Государствăн канала йышăнакан комиссийĕ, пĕр районтан тепĕр района куçса çўресе, канал çинчи шыв айне пулмалли сооруженисене тĕрĕслесе йышăнать.

Часах Атăлпа Дон хушшинчи канал çинче пĕрремĕш навигаци ялавне çĕклĕç, унта ялав вĕлкĕшме тытăнĕ.

В. ОШЕЙКО,
Атăлпа Дон хушшинчи стройка.

13-мĕш шлюз витĕр малтанхи суднăсем тухнă

ИЛЬЕВКА (Сталинград облаçĕ), майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Атăлпа Дон хушшинчи каналăн 13-мĕш шлюзĕ тĕлĕнче çутăсем ялтăртатса çутатма тытăнчĕç. Управлени башнисен çаврака тăррисем çинче, канал урлă хывнă кĕперсен çўлĕ карлăкĕсем çинче, пысăк та хулăн алăксем çинче ялавсем вĕлкĕшеççĕ. Шлюза пырса кĕмелли пысăк хапхан юписем хушшинче: «Ырă сунса кĕтсе илетпĕр!», тесе çырнă транспарант çакăнса тăрать. Çакă вăл Цимлянски водохранилищĕрен шлюз витĕр тухса, канал тăрăх Карповски водохранилищĕне каякан малтанхи суднăсен командисене ырă сунса каланă сăмахсем.

Шлюз витĕр суднăсене кăларас. тата Дон патĕнчен канал тăрăх суднăсене хăпартма тытăнас умĕн шлюз камерине тата ун патне пымалли вырăна шыв тултармалла, унтан Дон шывне малалла юхма канална чарса тăракан пĕвене татса ямалла, пĕве вырăнне тасатмалла пулнă. Монтажниксем ремонтнăй хапхасен алăкĕсене уçаççĕ. Шыв Карповски водохранилищĕрен шлюз камерине кĕрлесе юхма пуçлать. Кунтан шыв шлюз патне пымалли вырăна тулма тытăнать, унти шыв шайĕ каналри шыв шайĕпе пĕр тан пулать. Çĕр чавакан 307-мĕш снарядăн команди пĕвене татса, пĕвене тасатма тытăнать.

Паян 13-мĕш шлюз камери витĕр Карповка патĕнчи водохранилищĕне çĕр чавакан икĕ снаряд тухса каять. Ку снарядсем Мариновка районĕнчи строительсене пулăшма 12-мĕш шлюз патне кайрĕç. Çĕр чавакан 307-мĕш снаряд та унта каймалла. Унăн команди снарядăн проектра палăртнă хăватĕнчен нумай ирттерсе çĕр чавса кăларать ĕнтĕ. Норма тăрăх снаряд сехетре 300 кубометр çĕр чавса кăлармалла пулсан, халĕ унпа пин кубометр таран çĕр чавса кăлараççĕ. Çапа тухнă экипаж 12-мĕш шлюз патне пымалли вырăна тасатмалли заданине срокчен пурнăçлама обязательство илнĕ.

Паян çĕр чавакан тепĕр икĕ снаряд килсе çитмелле, вĕсем те 13-мĕш шлюз витĕр тухса каймалла. Шлюзăн пур механизмĕсем те лайăх ĕçленĕ.

Çапла вара, Атăлпа Дон хушшинчи каналăн Дон енчи 20 километр тăршшĕ участокĕнче суднăсем çўреме тытăннă.

13-мĕш шлюз патĕнче халĕ те ĕç вĕрет-ха. Управлени башнисене штукатурка тăваççĕ, суднăсем пырса кĕмелли пысăк хапхан тимĕрпе бетонран тумалли юлашки пайĕсене хăвăртрах туса пĕтерме васкаççĕ.

Европăра гитлерла Германие хирĕç кĕрешес ĕçе активлă хутшăнмасăр тăнă, Совет Союзĕ çĕнтерсе пыни вăрçă часах вĕçленесси паларсан тин иккĕмĕш фронт уçма шут тытнă. Вĕсем хăйсен çарĕсене Европăна Совет Союзне çĕнтерў тума пулăшас тесе мар, фашизм пусмăрĕнчен хăтăлакан халăхсене демократиллĕ пурнăç çулĕ çине тăма чармантарас, Германире тата вăл пусмăрласа тăнă çĕршывсенче реакциллĕ режимсене сыхласа хăварас тесе илсе пынă.

США-па Англири империалистсем Совет Союзĕ йывăр кĕрешўре вăйсăрланĕ, вара эпир пĕтĕм тĕнчере пуç пулса тăрăпăр, тесе ĕмĕтленнĕ. Анчах çав ĕмĕтсем путланса ларчĕç. Фашистла Германипе милитаристла Японие вăрçăра çĕмĕрсе тăкнă. Совет Союзĕ вăрçăран тата хăватлăрах та çирĕпрех пулса тухрĕ.

Совет халăхĕ Аслă Отечественнăй вăрçăра çĕнтернĕ хыççăн тĕнчере вăйсем мĕнле вырнаçса тăни тĕпренех улшăнчĕ. Империалистсен лагерĕ нумай вăйсăрланчĕ, çав вăхăтрах демократипе социализм лагерĕ ўссе çирĕпленчĕ. Иртнĕ вăхăтра нумай çул хушши ССР Союзĕ тĕнчери пĕртен-пĕр социализмлă государство пулнă, ăна йĕри-тавра тăшманла капитализмлă государствăсем хупăрласа тăнă пулсан, халĕ ĕнтĕ лару-тăру чылай улшăннă. Совет Союзĕ пĕтĕм тĕнчери мирпе демократи тата социализм лагерĕн центрĕ пулса тăрать, çак хăватлă лагерь пĕрмай ўссе пырать.

Польша, Чехословаки, Венгри, Болгари, Румыни, Албани халăхĕсем, вĕсене Совет Çарĕ ирĕке кăларнă хыççăн, социализм тумалли çул çине тăчĕç. Эпир вăрçăра çĕнтерни нумай миллионлă Китай халăхне империалистсен пусмăрне сирсе пăрахма, çĕршыври пусмăрçăсенчен тата пĕтĕм тĕнчери империализм пусмăрĕнчен хăтăлма май пачĕ. Китай халăхĕн çĕнтерĕвĕ мирпе демократи фрончĕ çирĕпленсе пынине уççăн кăтартса тăрать.

Европа вăрринче мире юратакан Демократиллĕ Германи Республики пулса тăчĕ.

Фашистла Германипе империалистла Японие çĕнтерсе, Совет Союзĕ хăйĕн чиккисене Хĕвеланăçĕнче те, Хĕвелтухăçĕнче те çирĕплетрĕ, вырăс халăхĕн ĕмĕрхи çĕрĕсене каялла тавăрса илчĕ.

III.

Аслă Отечественнăй вăрçăра тăшмана çĕнтернĕ хыççăн совет халăхĕ питĕ пысăк хавасланăхпа мирлĕ ĕçе тытăнчĕ. Совет çыннисем пăнăма пĕлмесĕр ĕçлесе вăрçă чухне тăшман ишĕлтерсе хăварнă хуласемпе ялсене, заводсемпе фабрикăсене, колхозсене, МТС-семпе совхозсене юсама пуçларĕç, Сталин юлташ 1946 çулхи февралĕн 9-мĕшĕнче калана сăмахра кăтартса панă аслă программăна пурнăçлама тытăнчĕç.

Аслă çĕнтерў тунăранпа çичĕ çул тултарнине палăртнă май, совет çыннисем вăрçă хыççăнхи çитĕнўсене савăнса палăртаççĕ. Çак ĕçри тĕп итог вăрçă хыççăнхи пилĕкçуллăх задачисене ăнăçлă пурнăçлани, Совет государствин политикăллă тата экономикăллă хăвачĕ тата ытларах ўссе çирĕпленни пулать. Вăрçă хыççăнхи сталинла пилĕк çуллăх плана пирĕн промышленность срокчен — тăватă çулталăк та виçĕ уйăхра пурнăçларĕ. 1950 çулта промышленность продукцине, вăрçă умĕнхи 1940 çулхипе танлаштарсан, 73 процент ытларах туса кăларнă. Социализмлă ялхуçалăхĕ те пĕтĕмпе продукци туса кăларас тĕлĕшпе вăрçă умĕнхи шайран нумай мала иртнĕ. 1951 çулта та халăх хуçалăх планне ирттерсе тултарнă.

ССР Союзĕн пĕтĕм промышленноçĕ 1951 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, 16 процент ытларах продукци туса кăларнă. Промышленность продукци туса кăларни, 1940 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут ўснĕ.

Социализмлă ялхуçалăхĕнчи ĕçченсем те 1951 çулта çĕнĕ çитĕнўсем турĕç. Чылай районсенче çанталăк япăх пулнă пулин те, пирĕн çĕршывра тĕштырă 7 миллиард та 400 миллион пăт пухса кĕртнĕ. Çĕр мамăкĕ, сахăр кăшманĕ тата ытти культурăсем те 1950 çулхинчен ытларах пухса кĕртнĕ.

1951 çулта пĕр çул хушшинче пирĕн ялхуçалăхĕ 137 пин трактор (15 вăйлă трактор çине куçарса шутласан), тĕштырă пухса кĕртмелли 53 пин комбайн, 59 пин грузовик, тăпрана çемçетсе хатĕрлемелли тата ытти машинăсем 2 миллион илнĕ.

Сталин юлташ пуçарнипе Атăлпа Днепр, Донпа Аму-Дарья çинче гидротехникăн питĕ пысăк сооруженийĕсене тума тытăннă. Кун пек пысăк стройкăсем халиччен тĕнчере пулман. Коммунизмăн сталинла пысăк стройкисене хăвăрт тăваççĕ. Пур стройкăсенче те правительство кăтартса панă планесене ăнăçлă пурнăçлаççĕ. 1952 çулта пысăк стройкăсенчен пĕри—Атăлпа Дон хушшинчи суднăсем çўремелли канал ĕçе кĕрет.

Совет çĕршывĕнче наукăпа техника, литературăпа искусство пысăк çитĕнўсем турĕç. Пирĕн малта пыракан техника производствăна коммунизм чухнехи пек чи лайăх йĕркелемелли задачăсене ăнăçлă пурнăçлама май парать.

Куллен илекен тăварсене ваккăн сутмалли хаксене пĕрмаях йўнетсе пынипе халăх тупăшĕ, вăрçă умĕнхи вăхăтрипе танлаштарсан, чылай ўсрĕ.

Пирĕн çĕршыври рабочисемпе хресченсем тата интеллигенци куллен-кун патриотла пысăк çĕкленўпе ĕçлесе пураççĕ, совет çыннисен мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхне, ССР Союзĕнчи халăхсен çирĕп туслăхне, большевиксен партийĕпе аслă çулпуçăмăр тата учителĕмĕр Сталин юлташ тавра тачă пĕтĕççе тăнине кăтартса параççĕ. Совет халăхĕ большевиксен партийĕ ертсе пынипе, Сталин юлташ çул кăтартса пынипе коммунизм çĕнтерĕвĕ патне шанчăклăн малалла утать.

IV.

Совет государстви, хамăр халăха коммунизм строительствинчи задачăсене пурнăçлама организацилесе, пĕрмаях мирлĕ политика тытса пырать, халăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесе пурăнмалла тума тăрăшать. Совет государстви, миршĕн кĕрешсе, Ленинпа Сталин кăтартса панисене—социализмпа капитализм мирлĕ пурăнма пултараççĕ, тесе каланине асра тытать. Америкăри провинцисенчи хаçатсен редакторĕсен ушкăнĕ панă ыйтусем çине ответлесе, нумай пулмасть Сталин юлташ тепĕр хут çапла каларĕ: «Икĕ енĕ те пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнма тăрăшсан, хăйсем илнĕ обязательствăсене пурнăçлама хатĕр тăрсан, пĕртанлăх принципне тата ытти государствăсен шалти ĕçĕсене хутшăнас мар принципа пăхăнса пырсан, капитализмпа коммунизм пĕр-пĕринпе мирлĕ пурăнасси питех те пулма пултарать», терĕ.

Мир тĕрекленсе пытăр тесе, пĕтĕм тĕнчере лăпкă самана пулмалла тăвас тесе, Совет правительстви вăрçă хыççăнхи çулсенче тавлашуллă ыйтусене татса пама темиçе хут та питĕ паха сĕнўсем пачĕ. Совет правительстви атомлă хĕçпăшала чарса лартма, пилĕк аслă державăн хĕçпăшалĕсене тата хĕçпăшаллă вăйĕсене виççĕмĕш пайĕ чухлĕ чакарма сĕнчĕ. Совет правительстви пилĕк аслă держава пĕрле Мир Пакчĕ тума сĕнчĕ.

Совет правительстви Германипе мирлĕ договор тума тăрăшать, çав договора туни Германишĕн, çавăн пекех Европăри мирлĕ пурнăçшăн пысăк вырăн йышăнса тăрать. Нумай пулмасть Совет правительстви США, Великобритани тата Франци правительствисене Германипе тумалли мирлĕ договор никĕсĕсен проектне сĕнчĕ. Çав проекта Германи ыйтăвне мирлĕ майпа, пĕтĕм Германи халăхĕн интересĕсене асра тытса, пĕтĕм тĕнчери мире çирĕплетме кирлине астуса тунă.

Совет государстви тытса пыракан мирлĕ политикăна пĕтĕм тĕнчери ырă кăмăллă çынсем ырлаççĕ. Миршĕн тăракансен юхăмĕ куллен-кун сарăлса тата ўссе пырать. Пилĕк аслă держава пĕрле Мир Пакчĕ тума чĕнсе калани çине 600 миллион çын алă пуснă. Ырă шухăшлă çынсем Америкăпа Англири империалистсене пўлсе лартма, тĕнчере çĕнĕ вăрçă чĕртсе яракансене чарма хатĕр тăраççĕ.

Вăрçа хирĕç тăракан вăйсем тĕнчери реакцин хура вăйĕсенчен пысăкрах, çавăнпа ĕнтĕ вăрçă тухасси ик-виçĕ çул каялла пулниччен ытларах çывхарса килчĕ тесе калама нимĕнле сăлтав та çук. Мĕнпур çĕршывсенчи миршĕн кĕрешекенсене Сталин юлташăн çак сăмахĕсем хавхалантараççĕ: «Мире сыхласа хăварас ĕçе халăхсем хăйсен аллине илсен тата ăна вĕçне çитиччен хўтĕлесе тăрсан, мир сыхланса юлĕ тата тĕрекленĕ».

Аслă Китай халăхĕ, Корея, Польша, Чехословаки, Венгри, Румыни, Болгари, Албани, Монголи Халăх Республики, Демократиллĕ Вьетнам Республики, Демократиллĕ Германи Республики халăхĕсем Совет Союзĕпе пĕрле миршĕн кĕрешеççĕ, вĕсем мирпе демократи тата социализм лагерĕнче пĕтĕçсе тăраççĕ.

Çĕнĕ пурнăç тумалли çулпа малалла пырса, халăх демократи çĕршывĕсем, Совет Союзĕ тăванла пулăшнипе, промышленноçа, ялхуçалăхне тата культурăна аталантарас ĕçре чаплă çитĕнўсем турĕç.

Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсем пĕтĕм вăй-хăватпа тăрăшса хуçалăхпа культурăна аталантарса пыраççĕ, çав вăхăтрах империализм лагерĕнчи çĕршывсем, Америкăри империалистсем хыççăн пырса, тĕнчере çĕнĕ вăрçă хатĕрлессине вăйлатаççĕ. Тĕнчере хамăр пĕччен пуç пулса тăрасçĕ тесе ĕмĕтленекен империалистсем иртнĕ вăрçă урокĕсене ăнланса илеймен, вĕсем, фашистла Германире пулнă тăмсай руководительсем пекех, ытти çĕршывсене тапăнмалли политика тытса пыраççĕ, фашистсен тĕллевне пурнăçлас тесе хапсăнаççĕ.

Америкăри империалистсем Корейăра юнлă вăрçă сарса ячĕç. Вĕсем, Корея халăхне—хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăр кĕрешекене çĕнтерес тесе, калама çук тискер ĕç турĕç, вăрçăра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курма тытăнчĕç.

США-ри тата ытти империализмлă государствăсенчи капиталистсен пĕрлешĕвĕсем, питĕ пысăк услам илес тесе, тĕнчере çĕнĕ вăрçă пушарне чĕртсе яма пур майсемпе те хăтланаççĕ. Империалистсем тем тĕрлĕ усал ĕçсем те тума именмеççĕ: çар вăйĕпе авантюрăсем тăваççĕ, çынсене вĕлереççĕ, экономика енĕпе хĕсеççĕ тата элеклеççĕ, шпионла ĕçсемпе диверсисем тăваççĕ, тĕттĕм кĕтесрен персе вĕлереççĕ е укçа парса сутăн илеççĕ, политика енĕпе хăратса улталаççĕ тата чума чирĕ сараççĕ. Çавăн пек тискер майсемпе усă курса, империалистсем демократипе социализм вăйĕсем ўссе пынине чарса лартма, истори урапине каялла çавăрма ĕмĕтленеççĕ.

Анчах империалистсен мĕнпур планĕсем путланса ларĕç, мĕншĕн тесен çав плансем истори аталанăвĕн законĕсене хирĕçле пыраççĕ. Çав вăхăтрах совет çыннисемпе халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕççыннисен паттăр ĕçĕ, капитализмлă çĕршывсенчи рабочи класс реакцие хирĕç кĕрешни истори аталанăвĕн законĕсемпе килĕшўллĕ пулса тăрать. Социализм пĕрмаях тĕрекленсе пыни, капитализм пĕрмаях вăйсăрланса пыни историпе, общество аталанăвĕнче пурпĕрех пулакан закон пулса тăрать.

Империалистсен тăрăшса тухса тĕнчере çĕнĕ вăрçă пуçласа ярас пулсан, вара капитализмăн пĕтĕм системи арканса кайĕ. Малашнехи ĕçсем çавăн пек пуласси совет çыннисем çирĕп ĕненсе тăраççĕ.

Прагăна Совет правительствин делегацийĕ пынă

ПРАГА, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Çарĕ Чехословакие ирĕке кăларнăранпа çичĕ çул тултарнине уявланă çĕрте пулма паян Прагăна Совет правительствин делегацийĕ пырса çитнĕ. Делегаци составĕнче: Совет Союзĕн маршалĕ И. С. Конев (делегаци пуçлăхĕ), СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ В. А. Зорин тата ССР Союзĕн Чехословакири посолĕ А. И. Лаврентьев.

Руза аэродромне Чехословакипе Совет Союзĕн ялавĕсемпе илемлетнĕ. Аэродромра Совет правительствин делегацине çаксем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: Наци Пухăвĕн председателĕ Олдржих Йон, премьер-министр Антонин Запотоцкий, премьер-министр заместителĕ тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Вилем Широкий, Наци оборонин министрĕ арми генералĕ А. Чепичка тата Чехословаки правительствин ытти членĕсем, Чехословакири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕсем Антонин Новотный, Вацлав Давид, Йозеф Тесла тата Йиндржих Угер, Нациллĕ фронта кĕрекен организацисен представителĕсем, Прага хулин приматорĕ Вацлав Вачек, Чехословаки республикинчи политикăллă тата общественлă ĕçри ытти деятельсем, Совет Союзĕн Чехословакири посольствин ответлă сотрудникĕсем, халăх демократи çĕршывĕсен тата Демократиллĕ Германи Республикин правительствисен уява пынă делегацийĕсен членĕсем тата çав çĕршывсен дипломати представителĕсем.

Совет правительствин делегацийĕ пынă ятпа аэродромра хисеплĕ хурал тăратнă, Чехословакипе Совет Союзĕн государство гимнĕсене вылянă.

Совет правительствин делегацийĕ Чехословаки премьер-министрĕ патĕнче пулнă

ПРАГА, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Паян СССР правительствин Совет Союзĕн маршалĕ И. С. Конев ертсе пыракан делегацийĕ Чехословаки премьер-министрĕ Антонин Запотоцкий патне официальнă тĕл пулса калаçма кайнă. Делегаци членĕсем премьер-министрпа пĕр-пĕрне чунтан-чĕререн хисеплесе калаçнă.

Паян премьер-министр Антонин Запотоцкий патĕнче çавăн пекех демократиллĕ Корея Халăх Республикин, Монголи Халăх Республикин, Польшăн, Румынин, Болгарин, Демократиллĕ Германи Республикин, Венгрин тата Албанин правительствисен Совет Çарĕ Чехословакие ирĕке кăларнăранпа çичĕ çул тултарнине уявланă çĕрте пулма Прагăна пынă делегацийĕсем те пулнă, вĕсем те официальнă йĕркепе тĕл пулса калаçнă.

Савонлинна хулинчи (Финлянди) рабочисен забастовки

ХЕЛЬСИНКИ, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Вапаа сана» хаçат çакăн çинчен пĕлтерет: «Вилгельм Шауман» акционерлă обществăн Савонлинна хулинчи завочĕн технически директорĕ нумай пулмасть пĕр рабочие ĕçрен кăларса янă. Ку рабочие ĕçрен кăларса янă хыççăн заводри рабочисем ĕнер забастовка пуçланă. Вĕсем технически директора ĕçрен кăларма тата ĕçрен кăларнă рабочие каялла ĕçе илме требовани лартнă.

Панчен-лама Лхаса хулине таврăннă

ПЕКИН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çакăн çинчен пĕлтерет: апрелĕн 28-мĕшĕнче панчен-лама Лхаса хулине таврăннă. Ăна 20.000 çын ытла хирĕç тухса кĕтсе илнĕ. Кĕтсе илекенсем хушшинче Тибетăн вырăнти правительствин представителĕсем, Тибет çарĕн отрячĕсем, тĕн ĕçĕнчи çынсем пулнă. Вĕсем панчен-ламăна саламланă. Панчен-ламăна çавăн пекех Китай халăхĕн центральнăй правительствин Тибетри представителĕ Чжан Цзин-у генералпа Китай халăхĕн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен çарĕн Тибетри чаçĕсен командующийĕ Чжан Го-хуа генерал хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

Лхаса хулинче çав кун уяв чухнехи пекех хаваслă иртнĕ. Лхасăра пурăнакансем панчен-лама каялла таврăнассине нумайранпа кĕтнĕ пулнă. Вĕсем çав кун хăйсен чи лайăх тумтирĕсене тăхăннă. Урамсене панчен-лама таврăннине ырласа çырнă лозунгсемпе тата плакатсемпе илемлетнĕ. Панчен-лама таврăнни вăл далай-ламăпа пĕр пулса ĕçлеме тытăнни çинчен калать. Çакă вара Тибета мирлĕ майпа ирĕке кăларасси çинчен тунă килĕшĕве пурнăçлама май парать.

Тĕн ĕçĕнче ĕçлекенсен тата Тибетăн вырăнти правительствин представителĕсем чаплă лару-тăрура панчен-ламăна салам ялавне панă, ăна саламласа сăмах каланă.

Чжан Цзин-у тата Чжан Го-хуа генералсем, çавăн пекех Халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен çарăн Тибетри чаçĕсен командирĕсем панчен-ламăна Лхаса хулине таврăннă ятпа саламласа ырă суннă.

Саламланисем çине ответлесе, панчен-лама çапла каланă: «Малашне эпир далай-ламăпа пĕрле, Мао Цзе-дун председатель тата Халăхăн центральнăй правительстви ертсе пынипе, Китайри тăванла мĕнпур национальноçсен пĕрлĕхне тĕреклетессишĕн, Тибет халăхне тачă пĕрлештерессишĕн тăрăшса ĕçлĕпĕр. Çĕнĕ Тибет тăвас тата хамăр Тăван çĕршывăн кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи чиккисен оборонине çирĕплетес шутпа эпир Тибета мирлĕн ирĕке кăларас пирки тунă килĕшĕве пурнăçласа пыма тăрăшăпăр».

Демократиллĕ Германи Республикин информаци ведомстви пĕлтерни

БЕРЛИН, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви Демократиллĕ Германи Республикин информаци ведомстви пĕлтернине пичетлеме панă. Ку пĕлтерӳре Демократиллĕ Германи Республикипе Хĕвеланăç Германи хушшинчи чикĕсенче юлашки вăхăтра провокациллĕ ĕçсем чылай пулни çинчен, çав ĕçсемшĕн Хĕвеланăç Германири Америкăн оккупаци влаçĕсем хӳтĕлесе тăракан правительсем пĕтĕмпех ответлă пулса тăни çинчен каланă.

Пĕлтерӳре, сăмахран, çакăн çинчен каласа панă: апрелĕн 14-мĕшĕнче Поссек ялĕ патĕнче (Саксони) Хĕвеланăç Германирен янă агентсем халăха ушкăнĕ-ушкăнĕпе чикĕ урлă каçма хĕтĕртнĕ. Кун пек хăтланнă вăхăтрах çав района, чикĕрен хĕвеланăçнерехри вырăна, Америкăн разведкăна çӳремелли броньăллă автомашини тата куçарса çӳремелли радиостанци лартнă автомашини пырса çитнĕ. Вĕсем çинче Америка салтакĕсем, вĕсемпе пĕрле офицерсем тата Бонри правительствăн чикĕри полицийĕн пĕр рядовой полицейскийĕ пулнă. Пĕлтерӳре çакна палăртнă: çав районта пурăнакансем тата халăх полицийĕ сыхă пулнă, çавна пула кăна унта, провокациллĕ ĕç тунă пулин те, нимĕнле тытăçса çапăçни те пулмасăр иртсе кайнă. Апрелĕн 26-мĕшĕнче Гомпертсхаузен ялĕ патĕнче (Тюринги), Хĕвеланăç Германин чикĕри полицийĕ пулăшнипе, çынсен пĕр ушкăнĕ чикĕ урлă Хĕвеланăç Германи территорине каçса каяссине организацилеме хăтланнă.

Пĕлтерӳре малалла çапла каланă: чикĕ урлă вăрттăн каçса каяссине организацилеме хăтланнисем тата Эмштадтпа Хелинген ялĕсем патĕнче (Тюринги), Вельтхейм ялĕ патĕнче (Саксони-Ангальт) тата ытти вырăнсенче те пулнă. «Çавăн пек ĕçсем пулнинчен,—тенĕ пĕлтерӳре,—халăха сутакан Бонри правительсем милитаризмла «пĕтĕмĕшле договор» çине алă пусма палăртнă вăхăт çывхарса çитнине кура чикĕсенче провокациллĕ ĕçсем пĕрмаях тата час-часах туса пыма, çапла майпа нимĕç халăхĕн пĕрлешес шухăшĕнĕтне путарса лартма хăтланни уççăнах палăрать. Анчах вĕсем нимĕç халăхĕ пĕрлешессишĕн тăрăшнине путарса лартма пултараймĕç! Демократиллĕ Германие Нациллĕ фрончĕ майлă тăракансем пурте сыхăлăха ӳстерме пур майсемпе те тăрăшмалла, государство хăрушсăрлăхĕн органĕсемпе сыхăну тытмалла, нимĕç халăхĕн хаяр тăшманĕсен преступникла планĕсене çийĕнчех пĕтерсе лартмалла, Демократиллĕ Германи Республикинчи мирлĕ строительство йĕркине пăсма хăтланакан агентсемпе провокаторсене тăрă шыв çине кăларма, вĕсене ответ тыттарма тăрăшас пулать».

* * *

АДН агентстви тата информаци ведомствин тепĕр пĕлтерĕвне пичетлеме панă. Ку пĕлтерӳре Демократиллĕ Германи Республикинчен тата Берлин хулин демократиллĕ секторĕнчен ĕçсыннисене улталаса çăмăллăнах пуян шутпа вăрттăн апат-çимĕçсемпе таварсем илсе кайса Хĕвеланăç Берлинра сутакан спекулянтсен шайккине тăрă шыв çине кăларни çинчен каланă.

Пĕлтерӳре çапла çырнă: Берлинри халăх активлă пулăшнипе Демократиллĕ Германи Республикин контроль органĕсем Хĕвеланăç Берлинри тĕрлĕ майпа хăтланса вăрттăн таварсем сутакан спекулянтсене тытма пултарчĕç. Хĕвеланăç Берлинри полици çав спекулянтсене пур майсемпе те пулăшса пыни, çав вăхăтрах Хĕвеланăç Берлинри ĕçсĕр тăрса юлнă çынсемпе пенсионерсене демократиллĕ секторта апат-çимĕç туяннăшăн хытă хĕсĕрлени паллă пулчĕ, тенĕ пĕлтерӳре.

* * *

АДН агентстви Демократиллĕ Германи Республикин информаци ведомстви шпионсемпе диверсантсен ушкăнне суд туни çинчен пĕлтернине хаçатсем çинче пичетлеме панă. Çав ушкăн Америка разведки хушнипе Демократиллĕ Германи Республикинче сăтăрла тата диверсиллĕ ĕçсем туса пурăннă.

Демократиллĕ Германи Республикин Верховнăй Сучĕ çав ушкăнăн пуçлăхĕсене—Гюнтер Германпа Эрнст Вагнера ĕмĕрлĕхе тĕрмене хупма, суд умне тăратнă ытти çынсене тĕрлĕ вăхăта—4 çултан пуçласа 15 çул таран—тĕрмене хупма приговор йышăннă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен отрячĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă, вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтернĕ.

Ĕнер вăтаçĕрти тата хĕвеланăçĕнчи фронтсенче тăшман, авиаци тата артиллери пулăшнипе, Халăх çарĕн чаçĕсен позицийĕсем çине темиçе хутчен те атакăсем тунă. Анчах тăшмана каялла хăваласа янă, ăна сиен кӳнĕ.

Халăх çарĕн зенитнăй артиллери чаçĕсем тăшманăн 2 истребительне персе ӳкернĕ, çав самолетсем унччен, ытти самолетсемпе пĕрле, мирлĕ халăх пурăнакан хуласемпе ялсем çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ пулнă.

ПХЕНЬЯН, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕн паянхи пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ. Ĕнер фронтăн уйрăм участокĕсенче тăшман, авиаци тата танксем пулăшнипе, Халăх çарĕн позицийĕсем çине тапăнса атакăсем тума хăтланнă. Анчах тăшмана каялла хăваласа янă, ăна сиен кӳнĕ.

Корейăн хĕвелтухăçĕнчи çыранĕ çывăхĕнче тупăсемпе персе тăшманăн пĕр тральщикне шыва путарнă.

Зенитнăй артиллери чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтаксем тăшманăн 5 самолетне персе ӳкернĕ.

Америкăн сывлăшри вăрă-хурахĕсем тискеррĕн тапăнаççĕ

ПХЕНЬЯН, майăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине тата кăнтăрла Америкăн реактивнăй самолечĕсем Пхеньян таврашĕнчи вырăнсене 12 хутчен тапăннă, бомбăсем пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ. Самолетсем хресченсем ĕçлекен уй-хирсем çине тата Пхеньяна пымалли çулсем тăрăх пыракан хресченсен лавĕсем çине бомбăсем пăрахнă, пулеметсемпе пенĕ. Çавăн пек тапăннипе пула хăшпĕр çурт-йĕрсем ишĕлнĕ, граждансла халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пулнă.

Çурçĕр Корейăри çурхи ака ĕçĕсем

ПХЕНЬЯН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Çурçĕр Корейăри пур районсенче те çурхи ака ĕçĕсем аван сарăлнă. Пур çĕртен те хресченсем çураки планĕсене пурнăçлани тата çав планесене иртерсе тултарни çинчен пĕлтереççĕ.

«Минчжу чосон» хаçат хресченсем уй-хирте пысăк хастарлăхпа ĕçлени çинчен пĕлтерет. Апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне Çурçĕр Корейăн пĕтĕм территорийĕнче, иртнĕ çулхи апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне акнипе танлаштарсан, 20 процент нумайрах тырă акса хăварнă.

Хаçат çакна палăртать: Çурçĕр Корейăри фронт çывăхĕнчи провинцире — Хванхэ провинцийĕнче—уй-хирте ĕçлекен хресченсене Америка самолечĕсем час-часах тапăнаççĕ. Самолетсем хресченсем çине бомбăсем пăрахаççĕ, пулеметсемпе переççĕ. Çапах та ку провинцире çурхи ака ăнăçлă пулса пырать. Провинцири хресченсем апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне, пĕлтĕрхи апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне акнипе танлаштарсан, 30 процент пысăкрах çĕр лаптăкĕ çине тырă акса хăварнă. Уй-хирте рис калчисем лайăх шăтса тухнă, вĕсем симĕсленсе пыраççĕ, хресченсем вĕсене куçарса лартма тытăннă.

АНГЛИРИ РАБОЧИСЕМ МАЛАЙĂРИ ВĂРÇА ЧАРСА ЛАРТМА ЫЙТАÇÇĔ

ЛОНДОН, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Манчестерти тата Солфордри профсоюзсен совечĕ резолюци йышăннă. Çав резолюцире вăл Темплер генералăн Малайăри тискер ĕçĕсене сивлет, Англи çарĕсене Малайăран илсе тухма ыйтать.

Строитель-монтажниксен профсоюзĕн Манчестерти уйрăмĕ çавăн пек протестлесе çырнă çырăва Темплер патне тата ют çĕршыв ĕçĕсен министерствине ярса панă.

Жестянщиксен нациллĕ профсоюзĕн Ковентри хулинчи уйрăмĕ те хăйĕн резолюцийĕнче Малайăри вăрçа халех чарса лартма ыйтать.

АНГЛИРИ МУНИЦИПАЛЬНĂЙ ОРГАНСЕН СУЙЛАВĔ

ЛОНДОН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çакăн çинчен пĕлтерет: майăн 5-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче Англире муниципальнăй органсен суйлавĕ пулать. Англипе Уэльс графствисенчи хуласен округĕсенче 570 муниципальнăй совет, ялти округсемпе приходсенче темиçе çĕр муниципальнăй совет суйламалла.

Шотландире хуласенчи муниципальнăй советсен суйлавне майăн 6-мĕшĕнче, округсен муниципальнăй совечĕсен суйлавне майăн 13-мĕшĕнче ирттереççĕ.

Франци халăхĕ американецсем Францие оккупацилессине хирĕç кĕрешет

ПАРИЖ, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Франци халăхĕ американецсем Францие оккупацилессине хирĕç тата унтан Америка çар çыннисен казармине çар бази туса хурассине хирĕç хытăрах та хытăрах кĕрешет. Çав кĕрешӳри пĕр тĕслĕх çинчен паян «Юманите» хаçат каласа кăтартать. Ревел-Боллок районĕнче (Турн Гаронна департаменчĕ) Америка çарĕн çĕнĕ аэродромне тума тытăннă. Кун пирки районти халăх хытă тарăхнă. Халăх нумай пухăннă пысăк митинг пулнă. Аэродром тунине хирĕç митинга пухăннисем пурте пĕр шухăшлă пулса хытă протестленĕ, вĕсен районне çарсем тăракан вырăн туса хурассине хирĕç кĕрешес, çар аэродромĕ тума парас мар, тесе решени йышăннă. Митинг хыççăн темиçе çĕр хресчен «Марсельеза» юрласа çар аэродромĕ тума пуçланă уй-хире кайнă. Вĕсем унти çĕре висĕнĕ чухне лартнă юпасемпе шалчасене кăларса ывăтнă, самолетсем лартмалли ангара арçатса тăкнă.

«Американецсем, кунтан тухса кайăр!» тесе хаяррăн каланине Америкăн Францири оккупанчĕсен пур çĕрте те илтме тивет.

Франци влаçĕсем хăйсен Америкăри хуçисене халăх тарăхăвĕнчен хӳтĕлеме пур майсемпе те хытă тăрăшаççĕ. Çалă Об департаменчĕн префекчĕ Лафон до Сантенак хăйне пăхăнса тăракан мэрсем патне янă çыруран лайăх курăнать. Унта çапла çырнă:

«Юлашки вăхăтра çулсем çинче те, обществăллă çуртсем çинче те тĕрлĕ çырусемпе чĕнсе каланисем час-часах пулаççĕ. Вĕсем пирĕн пирки усăлла шухăшлаттарма пултараççĕ. Америка çарĕн Францире тăракан соединенийĕсем вĕсене сăмахпа тарăхтарнă пирки хытă кӳреннĕ. Малашне çавăн пек çырма тата чĕнсе калама чарăр».

«Юманите» хаçат ку çырăвăн текстне пичетлесе, çакна палăртать: влаçсен нимĕнле распоряженийĕсем те, вĕсем тем тĕрлĕ хĕсĕрлени те Франци халăхĕ çĕршыва Америка оккупацийĕнчен ирĕке кăларассишĕн кĕрешессине чарса лартма пултараймĕ, Франци халăхĕ оккупантсене хирĕç кĕрешме çирĕп шухăш тытнă.

Американецсем Италире иртĕхнине хирĕç Итали халăхĕ протестлет

РИМ, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Флоренци хулинче тата провинцийĕнче пĕтĕмĕшле забастовка пулнă. Забастовкăна хутшăннă ĕçсыннисен организацийĕсем хăрушсăрлăха пĕрле хӳтĕлес ĕç управленийĕн Италири миссийĕн руководителĕ Дейтон американец хушнă тăрăх «Галилео» текен оптика завочĕн технически директорне ĕçрен кăларса янине хирĕç протестленĕ. «Унита» хаçат çапла пĕлтерет: промышленность предприятийĕсем, хула транспорчĕ тата магазинсенчен нумайăшĕ пачах ĕçлемен. Флоренцири ĕçсыннисем, халăхăн тĕрлĕ сийĕсен представителĕсем тата ытти хуласенчи ĕçсыннисен делегацийĕсем Санта Кроче площадĕнче пулнă пысăк митинга пухăннă. Митингра Ĕç палатин тата демократиллĕ партисен вырăнти организацийĕсен руководителĕсем сăмах каланă.

Забастовка 16 сехетрен пуçласа 24 сехетчен пынă.

«Унита» хаçат çакăн çинчен пĕлтерет: коммунистсен партийĕн генеральнăй секретарĕ Тольятти суйлав пуçланнă май Фоджа хулинче сăмах тухса каланă. Муско инженера «Галилео» завочĕн технически директорĕнчен кăларнă пирки вăл çапла каланă: «Фашизма хирĕç хастарлă кĕрешнĕ çынна, «Галилео» завочĕн организаторĕпе руководительне коммунистла шухăшлă пулнăшăн ĕçрен кăларма Америка миллионерĕ приказ панă. Америка миллионерне эпир çакна асра тытма канаш паратпăр: хăй вăхăтĕнче нимĕçсем те пирĕн çĕршывра ун пекех, чурасемпе çуту-илӳ тăвакансем пекех, тыткаларĕç пулсан, Итали халăхĕ нимĕçсенчен хăтăлчĕ», тенĕ.

Канада халăхĕ миршĕн тăрать

ОТТАВА, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Буржуалла хаçатсем тата радио Совет Союзне хирĕç пропаганда тăваççĕ тата элек сараççĕ пулин те, Канада халăхĕ хушшинче Совет Союзĕпе мирлĕ пурăнассишĕн тата тусла çыхăнусем тытассишĕн тăрăшас шухăш вăйланса пырать. Çакна буржуалла хаçатсен те ирĕксĕрех йышăнма тивет.

Монреалта тухакан «Стар» хаçат çакăн çинчен пĕлтернĕ: Канадăри обществăллă шухăш институчĕ халăхран «Ыранхи хаçатсен малтанхи страницисенче эсир пысăк заголовокпа çырса пĕлтернĕ мĕнле чаплă хыпара вуласшăн?»—тесе ыйтнă. Çав ыйтăва хирĕç çынсен пысăк пайĕ—59 проценчĕ — çапла ответленĕ: Эпир мирлĕ пурнăç туни çинчен, Корейăра мир туни çинчен, Совет Союзĕпе килĕшӳ туни çинчен, пĕтĕм тĕнчери мир çинчен пĕлтернĕ хыпара вуласшăн, тенĕ. «Мирлĕ пурнăç вăл питĕ паха, теççĕ Канада çыннисем»,—тесе çырать «Стар» хаçат.

Шотландири горняксем миршĕн кĕрешеççĕ

ЛОНДОН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли уоркер» хаçат çакăн çинчен пĕлтерет: ĕнер Эдинбургри Кингс-паркра горняксен кашни çул ирттерекен пысăк уявĕ пулнă. Уява 50 пин çын пухăннă.

Шотландири горняксен профсоюзĕн председателĕ Э. Моффат митингра сăмах тухса каланă. Вăл Англири шахтăсенче тĕрлĕ инкексем пулнинчен кашни çул 500 горняк вилни тата 170 пин горняк чăлахланни çинчен каласа кăтартнă. Пневмокониоз чирĕпе кашни çул 500 çын вилет, нумай пин горняксем çав чирпе асапланса хĕн-хур кураççĕ. «Пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн кĕрешсе, пирĕн çак кĕрешӳ миршĕн тата хĕçпăшал хатĕрлемелли программăна чакарассишĕн кĕрешессипе танă çыхăнса тăнине ăнланса илес пулать», тенĕ Моффат.

Уяв вăхăтĕнче Польшăри горняксемпе Чехословакири горняксенчен саламлă çырусем илнĕ.

Австрире „альпийски крепоçе" тунă пирки Австри хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

ВЕНА, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Эстеррейхише фольксштимме» хаçат çакăн çинчен пĕлтерет: нумай пулмасть Зальцбург хулинче строительство ĕçĕсен 38 пысăк фирмин представителĕсен канашлăвĕ пулнă. Канашлура тĕрлĕ çар укрепленийĕсем тата базăсем нумай тăвасси çинчен сӳтсе явнă. Çав укреплениесемпе базăсене Австрин хĕвеланăçĕнчи пайĕнче тума палăртнă, вĕсене «альпийски крепость», тесе ят панă. Канашлура çакă паллă пулнă: «альпийски крепоçе» тăвасси çинчен пĕр енчен—Фигль канцлерпа Австрин строительство промышленноçĕн представителĕсем, тепĕр енчен—США-н Австрири верховнăй комиссарĕ Доннелли пĕрле пухăнса сӳтсе явнă иккен.

Хаçат Австри территорийĕнче Америкăн асăннă «крепоçне» тума Австри правительстви укçа парса тăрасси çинчен çырать.

НАЦИОНАЛИСТСЕН КИВĔ ГИМННЕ ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИРЕ «ГОСУДАРСТВО ГИМНĔ» ТЕСЕ ШУТЛАМА ЙЫШĂННĂ

БЕРЛИН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕвеланăç Берлинри хаçатсем паян пĕлтернинчен çакă паллă пулнă: Бонри президент Хейс Германин ĕлĕкхи гимнне—«Германи, Германи темрен те хаклăраххи...» тесе пуçланакан юрра Хĕвеланăç Германи «государство гимнĕ» тесе шутлама йышăннă. Хĕвеланăç Германи гимнĕ пирки Аденауэрпа Хейс пĕр-пĕрин патне çырусем çырнă. Çав çырусенчен Германири националистсен ĕлĕкхи гимне Хĕвеланăç Германин «государство гимнĕ» вырăнне шутлама Аденауэр çине тăрса сĕннипе йышăнни курăнать.

Бонри президентăн канцелярийĕн заявленийĕнче ĕлĕкхи кайзерлă Германин гимнĕн пур строфисене те Хĕвеланăç Германири «государство гимнне» кĕртни çинчен каланă, тесе çырать «Дер таг» хаçат.

Индири муниципальнăй органсен суйлавĕ

ДЕЛИ, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Бидарта (Хайдерабад штачĕ) вырăнти муниципалитета суйланă чухне Халăхăн демократиллĕ фрончĕ çĕнтернĕ. Муниципалитетра 17 вырăнтан Халăхăн демократиллĕ фрончĕ 12 вырăн, Индин нациллĕ конгресĕ текен парти 5 вырăн илнĕ.

Раджендра Прасад—Инди президенчĕ

ЛОНДОН, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви илнĕ хыпар тăрăх, паян Инди президенчĕ пулма Раджендра Прасад доктора суйлани çинчен пĕлтернĕ.

ДЕЛИ, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Инди президенчĕн суйлавĕнче хальĕ çеç хăш кандидатшăн миçе сасă пулнине шутласа тухнă. Президент пулма влаçра тăракан Индин нациллĕ конгресĕ текен партин кандидачĕ Раджендра Прасад суйланнă.

Пичет кунне Шупашкарта уявлани

Майăн 6-мĕшĕнче Советсен çурчĕн пысăк залĕнче Шупашкар хулинчи парти, профсоюз тата комсомол активĕн тата корреспондентсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура большевикла пичет кунĕ çинчен «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн ответлă редакторĕ В. Я. Яковлев юлташ доклад турĕ.

Пухура тухса каланă юлташсем «Советская Чувашия» тата «Коммунизм ялавĕ» хаçатсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклерĕç тата вĕсен ĕçне лайăхлатма сĕнӳсем пачĕç.

Пуху пысăк çĕкленӳпе халăхсен юратнă сулпуçĕпе учителĕ И. В. Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

Пуху хыççăн юрăпа ташă ансамблĕ тата Чăвашсен государство филармонийĕн артисчĕсем концерт пачĕç.

Радио кунне паллă туни

Радио кунне Шупашкарти ĕçсыннисем чыслăн паллă турĕç. Майăн 7-мĕшĕнче колхозник çуртĕнче радио работникĕсемпе радио ĕçне юратакансен тата радио итлекенсен хулари пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пухура республикăри çыхăну управленийĕн главнăй инженерĕ В. Николаев юлташ Радио кунĕ çинчен, пирĕн çĕршывра радио ĕçĕ хăвăрт аталанса пыни çинчен доклад туса пачĕ.

Пухура пулнисем республикăна радиофикацилес ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе радио ĕçне юратакансене чĕнсе каланине йышăнчĕ.

Колхозник çуртĕнче радиоприемниксен тата радистсен ĕçне кăтартакан выставка тунă.

Юлашкинчен пысăк концерт пулчĕ.

УЧИТЕЛЬ ÇЫРНĂ КĔНЕКЕ

Мускавра, Педагогика наукисен академийĕн издательствинче, нумаях пулмасть «Школьный кружок юных пчеловодов» ятлă вырăсла кĕнеке пичетленсе тухнă. Унăн авторĕ—Канаш районĕнче ĕçлекен учитель И. И. Максимов юлташ.

И. И. Максимов тахçантанпах хурт-хăмăр ĕçĕпе интересленет, чăвашла темиçе кĕнеке кăларнă.

Чăваш АССР государство издательствинче унăн 1952 çулта «Хурт-хăмăра пăхса усрасси» ятлă кĕнеки тухмалла.

Атăл çинче

Атăл шывĕ юлашки талăк хушшинче 17 сантиметр, кăçал пурĕ 6 метр та 88 сантиметр хушăннă.

Ĕнер ирхине, 8 сехет тĕлне сывлăшра 0 градус, шывра 8,4 градус ăшă пулнă.

Шупашкар пристанне илсе килсе вырнаçтарса лартнă. «Ударник Потапов» пăрахут Атăл урлă йĕркеллĕ çӳрет, вăл Приверхэ тата торф предприятийĕ патне пассажирсем каçарать.

Майăн 6-мĕшĕнчен пуçласа «Красное знамя» пăрахут Шупашкарпа Хусан хушшинче çӳреме пуçларĕ. Шупашкартан вăл мăшăрлă числасенче Мускав вăхăчĕпе 17 сехетре тухать, Хусантан хăраххăн числасенче 17 сехет те 40 минутра тухать.

Атăл çинчи пысăк пăрахутсем майăн 16-мĕшĕнчен пуçласа çирĕп расписани тăрăх çӳреме тытăнаççĕ.

«Коммунизм ялавĕн» çитес номерĕ майăн 11-мĕшĕнче тухать.

Ответлă редактор заместителĕ
И. П. ПАВЛОВ-ПИНЕР.

Госстрах килти пурлăха ирĕклĕ страховани тăвать

Килти япаласене, тумтире, атă-пушмака, пичетлемелли тата çĕлемелли машинăсене, музыка инструменчĕсене, кĕнекесене, нотăсене, картинăсене, велосипедсене, ялхуçалăх продукчĕсене, строительство материалĕсене тата ыттисене те ирĕклĕ страховани тăваççĕ.

Пушар пулнă, шыв тулнă, çĕр чĕтренĕ е урăх кĕтмен инкек пулнă пирки страховани тунă япаласем пĕтсен е пăсăлсан, вара Госстрах укçа тӳлет.

Граждансем!

Килти пурлăха ирĕклĕ страховани тума вăхăтра договорсем тăвăр. Договор тума Госстрах инспекцине пырăр е агента чĕнĕр.

ГОССТРАХĂН ЧĂВАШ АССР-ĕнчи УПРАВЛЕНИЙĔ.

РЕСПУБЛИКĂРИ ВЫРĂС ДРАМА ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, майăн 9-мĕшĕнче,
„СЕМЬЯ"
Ыран, майăн 10-мĕшĕнче,
„Накануне"
Спектакльсем каçхине 8 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

„РОДИНА" КИНОТЕАТРТА

Майăн 9-мĕшпе 10-мĕшĕнче, кăнтăрлахи сеанссенче—
„Дикая Бара"
каçхи сеанссенче—
ют çĕршывра ӳкернĕ çĕнĕ илемлĕ фильм.
Кăнтăрлахи сеанссем 12, 14, 16 сехетре, каçхи сеанссем 18.15, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—7-32, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01332 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.